К С(чув)
К96

*Николай Кушманов*

31918 чув

# ТĂВАН ЕН
# КĔВВИСЕМ





**ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ**
**обозначенного здесь срока**

М т 3 3835 Т 5000 1989г

К КОНТРОЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

*Николай Кушманов*

С(чув) К К96

# ТĂВАН ЕН КĔВВИСЕМ

*Сăвăсемпе поэмăсем*

Национальная библиотека ЧР
4-031918
КР

*Шупашкар*
*Чăваш кĕнеке издательстви*
*1990*

ББК 84 Чув 7-5
К 96

ПРОВЕРЕНО
2010

**Кушманов Н. К.**
К 96 Тăван ен кĕввисем. Сăвăсемпе поэмăсем. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1990.

31918 чув

Кĕнекери произведенисен тĕп тематики — тăван тавралăх, унăн иртнĕ сăн-сăпачĕпе паянхи улшăнăвĕсем. «Тăван ен йыхравĕ» поэмăра автор паянхи ял пурнăçĕн ыйтăвĕсене хускатнă. «Турхан художникĕ» поэма А. А. Кокель ачалăхĕ çинчен.

ББК 84
Чув 7-5

К $\frac{4803710202-007}{М\ 136(03)-90}$ 61—90

ISBN 5-7670-0283-7

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1990 ç.

# *Сăвăсем*

## СĂВАПЛĂ ВЫРĂНСЕМ

* * *

«Упи каçми» варсемлĕ ман çĕршывăм.
Тӳрем çĕрсем тĕл пулăн пит сайра.
Йăмралăх шавĕнче эп ыррăн-сыввăн
Çил-тăвăл хыççăн ӳсрĕм артакра.

Йăх-несĕлсен çул-йĕрĕ пулнă йывăр, —
Час-час пăчланнă сас хĕн-асапра.
Кĕтмен çĕртен хăрсан та йывăç,
Çут шанчăк юлнă пурпĕр хунавра.

Çав хунавсем, вăрах тымар ярса,
Кирек епле çанталăкра ĕрченĕ,
Хĕвеллĕ, тăнăç кунсене ĕненнĕ.

Çынсен кунçулĕ те шăп çавăн евĕр
Октябрь хыççăн аталаннă евĕк,
Ильич вĕрентĕвне асра тытса.

* * *

Тăван ен юррисем —
Сар хĕвел тĕррисем.
Çывăхран, инçетрен
Илĕртеççĕ пире.

Авалхи тăвансем,
Кĕввĕрсем-хĕлĕхсем
Татăлманшăн хĕнре
Тав тăватпăр сире.
Тăван ен юррисем —
Çут хĕвел шевлисем.
Сирĕнпе ман чĕре
Тӳпере, ирĕкре...

## АЧАЛĂХ

Ялан аса илетĕп эп
ача чухне çарран
урамсенче тусан
вĕçтернине,
каç пуличчен юлташсемпе
шута манса шывра
кăвакал пек чăмса
ăмăртнине
е, тĕпĕр-тĕпĕр тутарса,
хаваслă сăн-питпе
ахăлтатса кулса
алхаснине.
Ачалăх! Çăтмахри кунсем!
Шухăшăмра кăна
ман ĕненес килмест
вăл кайнине.

## ТĂВАН ÇĔРШЫВ

Мĕн ачаран пит çывăх манăн чуншăн
Чечекленсе çĕнелекен çĕршывăм.
Çурхи садсемшĕн, ырă, тăнăç куншăн
Тавах ăна.
Вăл пултăр ĕмĕр сывă!

Хум вылятан уй-хир,
Каш-каш йăмралăх,
Ун хÿттине пытаннă савнă енĕм.
Кăшт леререх вăрман,
Кăвак туйралăх —
Çÿл тÿпене епле хитре çĕкленнĕ.

Тăван çĕршыв,
Санран инçе кайсан та,
Анне пекех пире шанса тăратăн.
Çул-йĕрĕ пулмасан та тикĕс, янтă,
Чăрмавлăха çĕнме вăй-хал паратăн.

Нихçанхинчен те халь тĕреклĕ эсĕ:
Ыр сунакан йышпа татуллă-туслă.
Сан хăватна татах çÿле çĕклесчĕ,
Кунран-кун пирĕн пурнăç пултăр тулăх.

Тăван çĕршыв,
Эс çамрăклăх пек шуххăн
Нихçан уçман çулпа пыратăн паттăр.
Санра яшсен вăй-халĕпеле шухăш
Пĕр иксĕлми.
Телейлĕн курăнатăн.

## ИКĔ УЯВ

Анне аса илетчĕ: «Эс çуралтăн
Пĕр пысăк уяв умĕн, кĕркунне.
Аçун сăн-пичĕ кулăпа çуталчĕ
Курсан-илтсен çĕн кайăк килнине.

Палатăри хĕрарăмсем пуплеççĕ:
«Мĕнле-ха пĕлтĕн çуратма, Матюк?
Ӳссессĕн ывăлу мухтанĕ, — теççĕ, —
Пулнишĕн уншăн ик уяв тăрук».

Çынсем эс кун курнишĕн хĕпĕртенĕн
Клуб еннелле утатчĕç савăнса.
Ялав та транспарант кашни çĕкленĕ,
Выртаттăм эпĕ вĕсене пăхса...»

Çав кун тĕпрен арканнă кивĕ пусмăр,
Ĕçхалăхĕн пуçланнă çуркунни.
Ана хăратайман тек юр та çумăр,
Янк! уçăлнă кăвак хуппин ани.

Çулсем иртўçĕн, чăн та, савăнатăп
Çав кун пулнишĕн маншăн ик уяв.
Манми Октябрь!
Эп сана мухтатăп,
Атте-анне, сире те пысăк тав.

* * *

«Чăн, инкеке сиссех, эс йĕтĕн пулĕ,
Ыран çунса каяс чух, çĕрĕпе.
Пушарĕ тухрĕ те, хаяр вут-çулăм
Çĕн çурт-йĕре пĕтерчĕ тĕппипе.

Каларăм аçуна — вăл ĕненмерĕ:
«Ялан ан сўт-ха тĕшмĕш çăмхине».
Синкер пулать, кулатăн кăлăх, — терĕм, —
Çавна эс туйнă», — сăмахлать анне.

Çынра, чăнах та, пур-тăр пысăк сисĕм,
Ялан чухлать-тĕр хурлăх пуласса.
Чуна шиклентерсессĕн шухăш-çиçĕм
Вăхăтлăха, тен, тăрĕ аптраса.

...Каçпа, ак, макăрма пуçларĕ хĕрĕм,
Пĕлместĕп, темшĕн лăпкă мар чунра.
Кумать вĕçĕ-хĕррисĕр шухăш йĕрĕ:
Епле-ши пулĕ самани ыран?

Тӳлек кунсем иртсессĕн те черетлĕн,
Усаллăх шутламасть-ха парăнма.
Ҫĕтмен ҫĕртен хăйса чĕрре кĕрет те
Пурсăмăра пуҫлать салхулатма.

Эфир шавлать: сассем янраҫҫĕ урмăш,
Ҫынмаррисемшĕн шурă та — хура.
Вĕсен кашниййĕ хăйне евĕр курмăш,
Сиенлетесшĕн чăнлăха-ырра.

Вăрăмах мар та сив элек ҫул-йĕрĕ,
Ҫапах та телее юнать, пӳлет.
Ҫакна халех туять-ши манăн хĕрĕм?
Пĕчĕккĕскер ĕсĕклесе йĕрет..

* * *

Тунсăхларăм паян эп, юлташăм,
Тăрнасем вĕҫнине сăнаса.
Уй-хирте вĕсемпе сывпуллашрăм,
Тăрса юлтăм пĕччен, ал сулса.

Тăрса юлтăм... Мĕскер-ши ҫухатрăм
Тăрнасем инҫете вĕҫнĕ чух?..
Ҫĕркунне ҫитсен ҫеҫ эп ăнлантăм:
Ҫамрăк ĕмĕр текех килес ҫук.

**ĔМĔРХИ ӲКЕРЧĔК**

Хĕвел тухсан, тĕпелĕн кукринче
Анне куллен чуста ҫăратчĕ.
Шевле вылянăҫем ун питĕнче
Пӳрте часах ыр шăршă саралатчĕ.

Çулсем иртӳçӗн çав сăнах умра,
Пĕр улшăну çеç — кухньăра ман арăм.
Ҫăмакана хывать çĕн çăкăра, —
Чĕремшĕн çак ӳкерчĕк çывăх, тарăн...

* * *

Чĕкеç чĕлхиллĕ пĕчĕк хĕрĕм,
Ҫулса-çиçсе кĕтсе илен.
Ҫапланнă ыйтăву тем-тĕрлĕ,
Пурне те ман пĕлесчĕ тен.

Эппин, хурав тупаймасассăн,
Вăрттăнлăхне кĕç уçăп хам.
Малаш шăпу епле-ши санăн?
Ҫакна çеç калаймасть никам...

* * *

Ача ӳсет, чупса çӳрет хавассăн,
Ҫул-йĕр ансат-ха ун малтанлăха.
Мăн çын пек хăш чухне сывлать вăл ассăн,
Пулăшсан çеç çĕнет чăрмавлăха.

Эпир те, аслисем, шăп çакăн евĕр,
Чăнах та, терт куратпăр хушăран.
Ялан пулмастпăр пĕр-пĕриншĕн евĕк,
Шик туйăмĕ пуссан кăткăслăхра.

Е тепĕр чух виç пусшăн сапалатпăр
Тапса тăран вăя хĕвĕшӳре.
Сăлтавсăрах, кунçул, сана хурлатпăр
Ҫая тăрса юлсан кĕрешӳре.

Çакна туятпăр: эпĕр тунă йăнăш
Килес ăрусенче пулмасть пĕр тăтăш.

* * *

Пин-пин тĕспе çиçет умра тавралăх,
Çу кунĕ халь ача кулли пекех.
Çĕршывăмра тăрать тӳлек çанталăк,
Синкер-сехмет хуçаланмасть текех.

Анчах аса илетпĕр халь те эпĕр
Уйсем-хирсем вутра çуннисене.
Тăшман мĕн чухлĕ тунă сăтăр тетпĕр,
Манма юрать-и пирĕн вĕсене:

Хатыньпеле Майданекăн кĕлне те,
Европăра фашист пуçпулнине?..
Тăван çĕре этем юнпа çĕнетнĕ
Шанса тăрса сар çу пек кунсене.

Телей — пĕлетпĕр — çăмăллăн килмен,
Ăна, куç шăрçи пек, упрар куллен.

* * *

Пур хăватлă, таса сыхăну
Халăхпа тăван çĕрĕн...

*В. Тимаков*

Çутçанталăк пытанчăк вăйпа
Ĕмĕрсем хушшинче аталаннă,
Этеме хӳшĕри çутăпа
Паянхи кун енне çул кăтартнă.

«Вĕç çӳлте — кăн-кăвак тӳпере».
Ҫайăка вăл çунат парнеленĕ.
Вăрманта, пушхирте, тинĕсре —
Чĕрчунсем пур çĕрте те ĕрченĕ.

Пĕр пек мар сăн-сăпачĕ вĕсен,
Ятсене нихăçан пăтраштармăн.
Халăхсем те çапла — тĕрлĕрен —
Уйăрма кашнинех эс пултарăн.

Утпала, кăшкăртса пуйăспа,
Ĕмĕрсем, ĕмĕрсем шав васкать.
Паллашсассăн çынсем хурлăхпа,
Ĕçпеле, туслăхпа çывăхланнă.

Халăхсен утса тухнă кунçулĕ —
Иртнипе паянхи çыхăнни.
Малашне те тĕпре пулĕ, юлĕ
Пурнăçа яланах çĕнетни.

* * *

Ҫашнин пур хăйĕн вăхăчĕ:
Ҫанталăкăн, этемĕн.
Ҫĕç çулçăсем йăлт тăкăнĕç:
Ҫаять тавра илемĕ.

Тин çеç кунта çу кунĕччĕ,
Сип-симĕсчĕ вăрманĕ,
Чечексемпе пин куçлăччĕ
Ҫиçсе выртан çаранĕ.

Хаваслă кайăк-кĕшĕкĕн
Юррийĕсем саламлăн
Пĕрмай янратчĕç кĕвĕллĕн,
Ирпе-каçпа асамлăн.

Ах, хамăр та пит шухăччĕ,
Лара-тăра пĕлмен çав.
Пуçра пин тĕрлĕ шухăшчĕ,
Ăçта кăна çитмен çав.

Тем те тăвас пек ĕмĕтлĕн
Çӳреттĕмĕр. Вăй-халлă.
Сисмен те — çамрăк ĕмĕрĕн
Çут кунĕсем çухалнă.

Сив çил çеç халь, ав, чăрсăррăн
Кумса çӳрет хураххăн.
Ларать сип-симĕс чăрăш та
Уçланкăра хăраххăн...

Қашнин пур хăйĕн вăхăчĕ
Çанталăкăн, этемĕн.
Кĕç çулçăсем йăлт тăкăнĕç,
Қаять тавра илемĕ...

## БОЛЬНИЦĂРА

Палатăсем, палатăсем...
Çиçет тасалăх пур çĕрте.
Ыйтуллă, ыйхăсăр кaçсем:
«Қу чир хăçан иртет?»

Авал чăваш каланă пек
Пăтпа чир-чĕр кĕрет.
Тухать калла вăл пĕрчĕпе,
Врачсем сипленĕрен.

Сейсмографсем пекех вĕсем
Тăраççĕ сыхăра.
Хăçан канаççĕ-ши хăйсем?
Ялан палатăра.

Чылай чир-чĕршĕн хамăрах,
Тен, айăплă эпир?
Аса кĕретпĕр каярах,
Ана туймастпăр ир.

Сасартăк шăплăха çурса,
Пострa шăнкрав янрать.
Шур тумлă хĕр лăплантарса
Тӳлеккĕн калаçать.

«Ыран ман операци», — тет
Пĕрле выртакансккер,
Çухатнă канăçне хăй, тен:
«Мана кĕтет мĕскер?»

Тепри, сывалнăскер, кунтан
Сывпуллашса тухать.
Хаваслăскер, чунтан-вартан
Пурне те тав тăвать.

Шур тумлă ырă тухтăрсем,
Тавах, тавах сире, —
Куллен сывалнăшăн çынсем,
Çĕнтернĕшĕн чире.

* * *

Çут тĕнче! Çĕр çинче пурăнма
Ансăртран çеç килетпĕр эпир, ăнсăртран,
Вĕренетпĕр кунта юратма,
Çилленме те пĕлетпĕр эпир ачаран.

Çыннисем те вара тĕрлисем:
Çывăххи, йăваш йытă пекех çыртакан...
Нумай мар çав чи çывăх туссем.
Туссенче те тупатпăр-çке эпĕр тăшман.

Çын сăн-пичĕ! Унра вуланать
Кĕвĕçӳ, тарăху, юрату, хумханни...
Темĕн тĕрлĕ сăлтав упранать...
Епле хаклă ялан пĕр-пĕрне ăнланни!

Çут тĕнче! Тус-йышпа пурăнма
Ансăртран çеç килетпĕр эпир, ăнсăртран.
Вĕренесчĕ чăн-чăн çын пулма,
Кĕрешме, çĕнтерме те пĕлесчĕ ялан!

* * *

Чĕрчун тĕнчи валли кăна-и кирлĕ
Кăтра вăрман, çут кӳлĕ е çаран?
Епле вĕсен илемлĕ каçĕ, ирĕ,
Юмаххăн курăнать кашни самант.

Анчах юханшывсем типсе лараççĕ,
Куç умĕнчех хăраççĕ йываççем.
Чăн айăпĕ камра? Çакна туясчĕ,
Ялан васкан пулсан та, сан, этем.

Сăх ĕмĕте пула хĕрӳ тĕллевĕн
Çул-йĕрĕпе пымастăн, иртĕхен.
Ыр чунлă Çĕр, юратнă амăш евĕр,
Каçарĕ тейĕн-и-ха халлĕхе?

Хăйне вăл хĕрхенме куллен чĕнет,
Курма пултарăн хурлăх хăв та тет.

* * *

Ёнер кăна каçса кайса мухтатчĕç:
«Вăл — гени!
Таврара ун пек çын çук!
Унпа терте çĕнсе утатпăр тачă,
Тĕллевлĕ пирĕн унпала кунçул».

Кăларчĕç пуçлăхран ăна васкавлăн.
Кĕрлерĕ тин ак урăх калаçу.
Çав çынсемех-çке критиклеççĕ шавлăн:
«Хăйне мăнна хуратчĕ ăçтиçук...»

* * *

Юлташăм, канăçсăр эс питĕ,
Тĕпчевçĕ пек мала пăхан.
Çĕнетĕве кӳресшĕн витĕм,
Хальччен курман çулпа утан.

Ёнер шанни паян пач кивĕ,
Шутламаллах пуль кун пирки.
Вучах кĕлленнĕ хыççăн сивĕ,
Çаплах-тăр пурнăçăн йĕрки...

* * *

Ма пытарас?
Çул сакăлталлă.
Калаçар мар-ха пит хатарлă.
Уяр кунра аça та çапĕ,
Ун чух вăйланĕ чун асапĕ.

Çавах хĕвел шевлиллĕ шанăç
Ан кӳтĕрех ултавлă канăç.
Малашлăх вут-кăварлăн çиçтĕр,
Ĕмĕтленни çывхартăр, çиттĕр!..

* * *

Нумай çисессĕн, пыл та йӳçĕ, теççĕ.
Тен, тĕрĕслĕх кунта пурах.
Сахалтарах ăна ман астивесчĕ,
Тăварĕ пултăр ытларах.

* * *

Халăхăма пит çывăх авалтан:
Ĕçченлĕх, тӳсĕмлĕх, сăпайлăх.
Манра çак енсенчен пĕри пулсан,
Хама тин туйăп: эп вăй-халлă.

* * *

Йăшсассăн та кун каçипе
Чĕремшĕн ют-ха ăшă вырăн.
Çут ĕмĕтĕн хавалĕпе
Шанса тăран: малашлăх — ырă.

Лăпкăлăха сивлетĕн тек,
Çунатлă шухăш илĕртӳллĕ:
Каçхи кăвайт та çакăн пек,
Хăй патнелле йыхрать хĕрӳллĕн...

* * *

Тапса тӑран ҫӑлкуҫӗ хӑй — поэзи,
Кирек хӑҫан та кӑмӑла уҫать.
Ун сиплӗ шывӗ вӑй-хала куҫать, —
Ӑна рехетленсе, юлташӑм, ӗҫӗн.

Тапса тӑран ҫӑлкуҫӗ хӑй — поэзи,
Йӑлтӑртатать вӑл ҫуттӑн ӗмӗрех.
Пит пархатарлӑ унӑн чыслӑ ӗҫӗ,
Юрра-кӗвве шӑнкӑртатса кӗрет.

## ЧӖЛХЕМӖРЕ

Аннен сӗчӗпеле кӗрсе вырнаҫрӑн
Чуна, юна.
Туптарӑн ӑс-хала.
Аттен ҫирӗплӗхне, вӑйне туймашкӑн
Вӗрентӗм эпӗ пӗр сана пула.

Вӗрентӗм эп илемлӗхе курмашкӑн,
Хӗвӗшӳри шавра ырра савма,
Хаваслӑ юрӑсем шӑрантармашкӑн,
Эс вилӗмсӗр пулнишӗн савӑнма.

Ют ӑсчахсем санран пит тӗлӗнеҫҫӗ:
Епле сыхланнӑ-ха ку таранччен?
Сӑмахӗсем ахах пек илӗртеҫҫӗ,
Тӗпченӗҫем таҫтах ҫитет инҫет.

Ытла та хӑйне евӗр-ҫке, юп-сумлӑ,
Арпашӑнса кайман ют чӗлхепе, —
Кӳрши-арши унпа пулсан та туслӑ,
Пурнас темен вӗсен витӗмӗпе.

Чи пысăк алана вăл асилтерĕ,
Çӳп-çап тени вĕçсе кăна тăрать.
Çынсем хăш сăмаха пит килĕштерĕç,
Çав çеç ун çӳпçине кĕрсе юлать.

Мĕн тăвăн?
Пур-ха манăçнă чĕлхе те
(Кулянмалли çут тĕнчере нумай).
Пур — халăх çăлкуçне типĕтекен те,
Йăх-ях чуна кирлех-ши ăнланма?

Анчах çавсем, çавсем хăш чух алхапăл
Параççĕ сĕнӳсем те хушусем:
Сăмах-юмахĕпе хăйсем пит сапăр,
Ĕçпе пăхсассăн — шĕкĕ хурчĕсем.

Чăваш ятне ан çĕрт!
Е çавăн евĕр
Каларăшсем, вĕрентнĕ сăмахсем
Асамлăхпа тулса янраççĕ евĕк,
Пит ăслă пулнă мар-и ватăсем?

Çырулăх пулмасассăн та чухланă
Йăх-несĕлсем чĕлхе пит кирлине.
Ламран лама куçса ăна упранă.
Амсанĕ кирек кам еткерлĕхне.

Раççей вăрманĕнче çĕр тĕрлĕ йывăç —
Çĕр тĕрлĕ халăх — хăй выранĕнче.
Кашнин чĕлхи упрантăр ыррăн-сыввăн
Хĕвел шевлиллĕ аслă çĕр çинче.

Чăваш чĕлхи!
Аçта кăна çитмерĕн?
Тĕтресĕр пултăрччĕ малашлăху.
Вутра, шывра, сив космоçра çĕтмерĕн,
Санпа мухтантăр ĕмĕр халăху!

31918гув

2. Заказ № 836.

* * *

Ялйышăмăн калаçăвĕ ансат:
Аван тет вăл кăçал тырри ăнсан,
Хĕл каçипе çитсе тăрсассăн утă, —
Ĕни те сурăхĕ пулаççĕ тутă.

Ялти çынсен калаçăвĕ тӳлек,
Таçта, таçта шырас темест телей,
Тăван çĕрпе вĕсен пĕрлешнĕ çулĕ,
Унпа пĕрле кашнин ăс-халĕ, мулĕ.

Пĕр-пĕр ăсчах витлевлĕ ят парсан,
Ăна кунта манмаççĕ нихăçан.
Хăшне-пĕрне кӳрет вăл чăн-чăн витĕм,
Сăмахĕсем куçаççĕ ĕмĕр витĕр.

Кӳрентерсессĕн, çилленес йăла
Ик-виç куна — пăтратмăн кăмăла.
Хуйха-суйха ялан пĕрле пайлаççĕ,
Ĕçчен çынна кăна сума сăваççĕ.

Ялти çынран вĕренмелли нумай,
Еткерлĕхре мĕн чухлĕ ун юмах?
Йăх-несĕлĕм кунта çут кун курнишĕн,
Хăй тымарне вăл упрама пĕлнишĕн
Аваллăхри тăвансене тавах...

* * *

Элек çути чăрмав курмасăр
Сан чунунта йăва тупсан,
Мана пĕрре те ăнланмасăр,
Савниçĕм, эсĕ уйрăлсан,

Йăлтах арканчĕ пирĕн туслăх.
Тахçан пĕрле çӳренине,
Хĕвел пек шанчăк çиçнине
Халь ĕненме те йывăр, тусăм.

Малашлăх та пит пушă пулнăн,
Йĕкĕлтесе е сиввĕн кулнăн,
Хакли, таси çухалнăнах
Чуна пăвать, тен, кăлăхах?

Çапах та эп сана кĕтетĕп,
Тĕлĕкĕмре санах чĕнетĕп.

* * *

Эп — чирлĕччĕ, эс шантараттăн
Мана часах сываласса,
Куллен телей, вăй-хал сунса
Сиплеттĕн ăшшăн, тараватлăн.

Сив шухăшсем манран таратчĕç,
Сирме пĕр эс çеç пĕлнĕрен.
Чĕремĕрсем хĕрӳн тапатчĕç,
Ĕмĕтсене ĕненнĕрен.

Сывалтăм эп, ак халь çӳретпĕр
Каçхи хула урамĕнче,
Умра — çĕн пурнăç — ĕненетпĕр,
Умра — телейлĕ ыр тĕнче.

* * *

Эс пулнă чух кăна ман пӳлĕм çутă,
Кĕтетĕп, тунсăхпа хуçăлнăскер.
Тăватăп эпĕ утăм хыççăн утăм,
Иртет минут та пĕр сехет пекех.

Килетĕн те каятăн, сивĕ тунсăх
Татах, татах чунра хуçаланать.
Эс пурччĕ те, чĕре юрлатчĕ, тусăм,
Эс çук — хаваслăх хăвăрт çухалать.

## КĔРХИ ШУХĂШСЕМ

I

*Гальăна*

Çулçисене тăкма пуçларĕ сад,
Тĕмсем çаралчĕç, чечексем, ав, шанчĕç.
Сив çил халь пур çĕрте хуçаланать.
Чунра халал йĕркийĕсем вăранчĕç.

Сана каласшăн ăшă сăмахсем,
Халь вĕсене илтмешкĕн эсĕ тивĕç.
Садра хуçалансан та сив кунсем,
Чечен юратăва нихçан тăм тивмĕ.

Савниййĕмçĕм! Кунран-кун эс хитре,
Çулсем мала чупсассăн та чарусăр.
Телей шевли çĕтмест-ха сăн-питре,
Кĕрхи кунсем иртмеççĕ кăлăх, уссăр.

Ан тив, хĕвелĕ перекетлĕрех,
Хĕмне те, çутине те сапалатăр.
Юратăву, калатăп, пурпĕрех
Умри çула çут çăлтăр пек çутаттăр.

II

Чӳречерен пăхатăн сад çине:
Сар çулçăсем ӳкеççĕ вĕлтĕр-вĕлтĕр,
Кĕтсе илетпĕр хĕл кунĕсене,
Улмуççисем кĕç уртĕç шурă чĕнтĕр.

Қалатӑн эсӗ: «Эпӗ ытларах
Çуркуннехи сада килӗштеретӗп.
Ун чух тавралӑх симӗс çутӑрах...»
Çапла, санпа сӑмахсӑр килӗшетӗп.

Сӑнатпӑр иккӗн: çӳллӗ тӳпере
Хуракӑшсем кӑнтӑралла вӗçеççӗ.
Пит шухӑшлӑн пӑхан чӳречерен,
Кӗрхи садра сар çулçӑсем ӳкеççӗ.

* * *

Çулсем иртӳçӗн тӗвӗленчӗ
Ик чун шыранӑ юрату.
Çунат сарса, чун çеçкеленчӗ:
Эс çеç халь маншӑн çывӑх тус.

Тинех эп, чи юратнӑ çыннӑм,
Хавхалану тыткӑнӗнче:
Епле хитре умри тӗнче!
Епле тата сана эп çывӑх!

Пуласлӑха мала хурса
Утар, чиперӗм, çума-çумӑн,
Хисеплесе, сума суса
Пурнар татуллӑ та пит туслӑн.

# *Поэмăсем*

## ТĂВАН ЕН ЙЫХРАВĔ

I

Пурнатăп хулара, куллен çӳретĕп
Ĕçе пиншер çынпа пĕрле ирех.
Кун хыççăн кун иртет, хăш чух сисетĕп,
Темскершĕн ăш вăркать.
Сăлтав мĕнре?

Кун пек самантсенче эпир час-час
Пăшăрханмасăр иртмĕ ĕмĕр тетпĕр.
Шăп çапларах — кăна аван пĕлетпĕр —
Тӳлек кунра та çил тухать кас-кас.

Е тепĕр чух тус-тантăшпа алхапăл
Пуплес килет чуна уçса темччен.
Хĕрӳллĕ шухăшсен ялтравĕнче
Сисместĕн те, çивĕчленет ăс-хакăл.

Пĕр улшăнусăр вăхăт шунăçем
Хула шăв-шавĕ, тен, пит йăлăхтарчĕ?
Асилӳсем пуçра капланнăçем
Кĕтмен çĕртен вăл канăçа мантарчĕ.

Мĕскер çитмест мана?
Хамран ыйтатăп.
Юлхаврах мар-ши эп юлташсенчен?
Калас шухăшăма, тен, пытаратăп,
Юлмарăм-ши кунçулăн уттинчен?

Çапла ыйтсан, туссем те хирĕçлеççĕ:
«Хăвна сăлтавсăр, кăлăх ӳпкелен.
Çитсе пырать ĕмĕтленнин кĕтречĕ,
Умри пуласлăхна ĕненнĕрен.

Пурнатăн хăтлă хваттерте, çемйӳ сан
Хĕн-хур мĕнне нихçан курман, туйман.
Ķирек хăçан хыпса çунан ĕçӳшĕн,
Мăшăрупа кил ăшшине упран.

Пур савăнмалăх сирĕн хĕр те ывăл,
Вĕсен кулли шăнкăртатать ир-каç.
Шутланă пек ӳсеççĕ ырă-сывă,
Ниме тăман ĕç-пуçшăн ан калаç.

Чĕрре ан кĕр, çырлах мĕн пуррипе эс,
Пĕр шухăшсăр куллен ĕçе çӳре.
Умра çиçен хитре ĕмĕтӳпе те
Ан каппайлан, вĕçеймĕн тӳпере...»

Сăлтавĕ пур-çке, хаклă вулаканăм,
Эппин, сана кĕттерес мар хытах.
Ĕнер каçпа çыру илсе вуларăм.
Аннем çырать.
Пурнать-ха хăй ялтах:

«Аçу вилнĕренпе çитет çулталăк,
Яла та мантăн-шим.
Ķилсем часрах...»
Сисетĕп, чунĕ кӳтнĕ, ку йăлт паллă,
Тăрать пек, хавшакскер, юнашарах.

Эрленнĕ ĕнтĕ эсĕ, ыр аннеçĕм,
Ķулянтарас килмест-çке ман сана.
Ķилтисене:
«Яла каятăп», — терĕм.
Ăш вăркани те иртрĕ пĕр кана.

II

Умра юратнă ял.
Чĕрем пăлханчĕ.
Сăрт тăрринчен сăнатăп халь ăна.
«Инçе çулта кăшт йăшрăн пулĕ, канччĕ», —
Хаваслăн вăл кĕтсе илет мана.

Мĕн ывăнни!
Кунта епле чун уçă,
Лĕп çилĕ вăрттăн чуптăвать питрен.
Çунат çапса автан сас пачĕ уççăн:
«Ман киккирик галстукунтан хитре!»

«Кăшт шахвăртан пуль, — тейĕ пĕр-пĕр критик. —
Ана-кăна пит чухлаймасть автан».
Калатăп шӳтлесе:
«Ун пурнăç çитнĕ,
Анранă ĕнтĕ шăрăх пуснăран...»

Шур пĕлĕт çĕклесе умран иртеççĕ
Хир еннелле пĕр вĕçĕм машинсем.
Ват йăмрасем кăштах йĕкĕлтесе:
«Тусанлă сывлăша та çăт-ха», — теççĕ.

«Асфальт та хăтлăх хулара куратăр,
Манма пăхатăр çăкăрăн хакне.
Ана, типсе кайсассăн, пăрахатăр
Подъездсенче ларан витресене.

Анчах та тар тăкмаççĕ мар-и уншăн
Тантăшусем куллен-кун уйсенче.
Вăй-хал хурса ĕçлеççĕ çĕн тырпулшăн
Вĕри вучах-хĕвелĕн айĕнче.

«Пĕр пĕрчĕрен пин пĕрчĕ пултăр», — теççĕ,
Ĕмĕтленни, чăнах, çитсе пырать.
Çĕр пулăхне çултан-çул ӳстереççĕ,
Мĕн палăртни вара пурнăçланать.

Эс ӳснĕ чух çитместчĕ çăкăр, çимĕç.
Имшер, хавшак туяттăмччĕ хама.
Çĕршывăма таптанă хыççăн нимĕç,
Пит йывăрччĕ тӳрех ураланма.

Çапах та парăнмарĕ паттăр халăх,
Лармарĕ пуç усса, мĕскĕнленсе.
Çĕкленчĕ те вăл улăпла вăй-халлăн,
Кĕрешрĕ пĕрмаях хĕрӳленсе.

Çак кĕрешӳ шăв-шавĕ илĕртӳллĕ,
Ĕçчен çынна мала утма хистет.
Эс ху та, ывлăм, ĕмĕтлĕ, çӳл пӳллĕ,
Тӳр пилĕк мар, килех, ялу кĕтет».

III

Ват ăсчах пек çапла калаçрĕ енĕм,
Йăмра тураттипе саламласа.
Ун ытамне кĕрсессĕн хĕпĕртерĕм:
«Салам, Турханăм!» — терĕм хумханса.

Манса каймарăн-и, тахçан шух юнăм
Санпа пĕрле чухне пăлханнине?
Ют çĕрсенче чылай эреш эп куртăм,
Анчах та юлтăн эс çеç чун тĕпне.

Ирпе-каçпа ялан умра çиçеттĕн
Тăри юрриллĕ хир анлăшĕпе.
Шухăшăмра санпа кăна пуплеттĕм,
Сывлаттăм тăван ен сывлăшĕпе.

Шăп çавăнпа çуллен курма килетпĕр
Чăваш тĕрриллĕ сан çуртусене.
Кунта пуçа таятпăр, ĕненетпĕр
Малашлăх иртнипе çыхăннине.

Мĕн-ма тесен кунта кашнин тымарĕ,
Мĕн-ма тесен кун курнă çакăнта.
Эппин, юлташ, яла асран-и ярăн,
Асамлăн йăлкăшсан вăл умăнта?

Урамĕсем çип çапнă пек тӳп-тӳрĕ,
Кашни кил умĕнче — лаштра йăмра.
Ем-ешĕл тумĕ — симĕс пурçăнран.
Вĕсен ăш хӳттинче хаваслăн çӳрĕн.

Çак чунлă йывăçра пин тĕрлĕ шухăш,
Кашниййĕ калаçать пек чăвашла.
Е çил тухсассăн каш! кашлаççĕ шуххăн,
Çĕклеççĕ ăс-хала та кăмăла.

Чĕтренчĕк çулçисем пĕр ӳркенмесĕр
Миçе çул ал çупаççĕ каç та ир?
Калаççĕ пек: «Çĕртен сĕткен илмесĕр
Çӳле пĕр шит те хăпарман эпир».

Йăмра!
Чăваш çыннишĕн хӳхĕм йывăç,
Тымар ярать кирек ăçта лартсан.
Тен, халăх хăй çапла хунанăран
Вăл унăн чунĕшĕн ялан пит çывăх.

...Ача çуралсанах чăваш васкавлăн
Йăл-йăл кулса йăмра лартать вăр-вар.
Атте калатчĕ куç хĕссе ытарлăн:
«Хăв хыççăн, ыльăм, йывăççем хăвар».

Ҫак сӑмахсен пӗлтерӗшӗ пит аслӑ,
Ана пуҫларӑм ӑнкарма эп тин.
Ман ятпала лартни те, ав, хаваслӑн
Калать пек шӑппӑн:
«Таврӑнтӑн эппин».

Аттен хӗр-ывӑлӗ — эпир тӑваттӑн,
Ҫурт умӗнчи йӑмри те ҫавӑн чул.
«Атте, — сывлатӑп ассӑн, пӑлханатӑп, —
Эп ӑнланман ҫакна эс сывӑ чух».

Ман ачасен йывӑҫҫисем ӳсмеҫҫӗ
Тӑван ялта тымар ярса патвар.
Вӗсен тымарӗ хулара — пӗлмеҫҫӗ
Ял пурнӑҫне манпа сан пек аван.

Ҫапах шанса тӑратӑп эпӗ ҫирӗп,
Ӳссен те манмӗҫ, ват йӑмра, сана.
Эппин, кашла эс шуххӑн каҫӑн-ирӗн,
Турат ҫумне турат хушса хуна!

IV

Ачалӑх кунӗсем ума тухаҫҫӗ:
Шӑхлич кӗвви янрать пек хӑлхара.
Хӑй тӗнчине вӑл йыхӑрать хальхаҫҫӑн,
Ҫӳретнӗ май мана кӑваклӑхра.

Унта чип-чип тухичченех чупаттӑм
Юлташсемпе пӗрле ҫара уран.
Чӗнетчӗ ирсерен кӑтра вӑрман,
Серте-пултран уҫланкӑра тататтӑм.

Пӗчӗккӗллех вут-шанкӑ пухнӑ хамӑр,
Ӗне урийӗ пуснӑ ҫамрӑклах.
Шӑп ҫавӑнпа пире хӑйса калаймӗҫ:
«Вӗсем, ав, ӳсрӗҫ терт курмасӑрах».

Ĕçченлĕхпе ăшра кашни мухтаннă,
Ķахал çынна ман халăх юратман.
Аттесенче тымар вăл çирĕп янă, —
Эппин, ачийĕсем патвар йăхран.

Апла пулин те, эп пит мухтамастăп,
Çав иртнĕ вăхăта пуç каçăртса.
Тертре-хĕнре анне сывланă ассăн,
Тырри пулман-çке хальхи пек ăнса.

Епле йӳнеçтерес?
Ир-каç шутланă:
«Атьсем ан лекчĕр хурлăх ытамне,
Вĕсем вĕренччĕр, курччăр ырлăх-канăç,
Ан пĕлччĕрех кунçул йывăррине».

Анчах ăна эпир кашни астивнĕ,
Аван чухлатпăр çăкăрăн хакне.
Тăраниччен мăнкун çитсен çеç çинĕ,
Ытти чух пĕлнĕ перекет мĕнне.

Ир пуçласа каçчен тар тăкнă мар-и
Аннемĕрсем каçалăксем çинче?
Ĕç куршанакĕ пирĕнтен хăпмарĕ,
Чăтма вĕрентĕмĕр аслисенчен.

Тен, çавăнпах сăввăмсене илемлĕх
Куçа йăмăхтарса иленеймест.
Чун-чĕреме пусать те сив кичемлĕх,
Хĕвел çути вара йăл-йăл çиçмест.

V

Тăван яла килсе каймассерен
Çакна эп темиçе хутчен сăнанă:
Атте-анне çуртне ват сăн кăшт çапнă,
Унченхинчен те вăл тĕксĕмтерех.

Мĕн калăн, иксĕлет çуллен ăшшийĕ,
Кĕр кунĕсем çитсессĕн çапларах,
Тем тĕрлĕ кайăксен тулли йăвийĕ
Пушаннă, кăнтăра ăсаннăран.

Паллах, ăçтан ăшши-хевти упрантăр,
Вĕр-çĕнĕ çуртсем пек ларма ялан?
Ачи-пăчи килсен сайра хутра çеç,
Ăна, кивĕскере, юсамасан?

Пӳрте кĕретĕп шаккамасăр, шăппăн,
Аннем ларать, ав, тĕпелте пĕччен.
«Мĕнле пурнатăн-ха?» — ыйтатăп лăпкăн,
Сăмах-юмах юхма пуçлать хуллен.

Çӳрет-ха вăл. Пĕрре пăхса калаймăн:
Кĕçех тултарĕ сакăр теçетке.
«Миçе çулта?» — ыйтсассăн, —
«Пурте хамăн,
Вилме те маннă мар-и çав, эккей.

Вăй-хал çитмест, — тет, — усрамашкăн
выльăх.
Мĕн тăвăн-ха?
Хавшатăп çулсерен.
Автансăр ялĕ те кĕтет пуль, ыльăм,
Тур çырнинчен хальччен никам иртмен...»

Хуланалла чĕнсе сăмах хушсассăн,
«Хупмастăпах сыв чух аçу çуртне.
Мĕн калĕç кӳршĕсем? — сывлать вăл ассăн.—
Пит йывăр хăнăхма хула шавне».

Татах пуплет:
«Кĕтӳ кĕтме çӳреççĕ
Ылмашăнса, кĕрĕшекен халь çук.
Эрнесерен çитсех тăрать черечĕ,
Қашни касра ик-виç кĕтӳ ку чух.

Ялта ӳсет ӗне те сурӑх йышӗ,
Хур-кӑвакал, чӑххи-чӗппи — чакмасть.
Ирпе халь шартлатмасть пӑшалӗ-пушӑ,
Выльӑхсене кӗтӳç ачи вӑрçмасть.

Çуллен патшалӑха какай сутаççӗ,
Сӗт пуçтараççӗ халӗ килсерен.
Хула çыннишӗн пурте тӑрӑшаççӗ,
Укçи-тенки те хушӑнать хӑйсен...

Çемйӳпеле килсе пурнас тесессӗн,
Пӗрре те кая мар хуларинчен.
Тен, лайӑхрах та пуль, туйсамччӗ эсӗ.
Вара эп пулмӑп ватлӑхра пӗччен...»

Ват çын чӗри, шутлатӑп, эх, мӑнтарӑн,
Кӗтсе пурнать, шанать-çке ыррине.
«Эп хирӗç мар-ха та... мӗн калӗ арӑм,
Малтан пӗлесчӗ унӑн кӑмӑлне...»

Çакна илтсен, аннеçӗм хавасланчӗ,
Çӳрет вӑш-ваш, сӑйласшӑн хӑй мана:
«Паян эс килессе кушак чухланӑ,
Питне ирех вӑл çурӗ пӗр кана».

«Аннеçӗм, — тетӗп, — тен, малтан каятпӑр
Атте патне, ӑна сума сӑвар».
Ӗçме-çиме илсе, çула тухатпӑр,
Ял хӗрринче пире кӗтет масар.

VI

«Ак çитрӗмӗр, — сӑмах пуçлать аннеçӗм, —
Пире ан асӑн эс унта, Кӗçтен.
Сан ятупа пӗçертӗм эп икерчӗ,
Эрех тавраш хампа илсе килмен.

Ăна сивлеттĕн-ха, аван пĕлетĕп.
Çав шĕвеке савман пурнăçунта.
«Вăл сывлăхăн чее тăшманĕ теттĕн», —
Аттепеле хăй калаçать чунтан.

Пуçа пĕксе, унпа пĕрле тăратăп
Умра курса юратнă çын сăнне.
Шухăшăмпа çитетĕп эп таçта та,
Тухса-и пулĕ ун вĕçне-хĕрне?..

Масар.
Сăваплă вырăн чĕррисемшĕн.
Чуна уçса, аттеçĕм, калаçар.
Кĕтетĕн ĕнтĕ, тăтăшах килменшĕн
Ӳпкелешетĕн пуль, каçар, каçар.

Курасчĕ сан: йĕри-тавра ĕлккенлĕх,
Çил вĕрнĕ май пуçне пĕкет çеçке.
Каçса кайса тăри юрлать илемлĕн,
Анчах та эс çакна илтместĕн-çке.

Сан хĕресӳ, ав, канăçна сыхланăн,
Хуралçă евĕрех тăрать пăхса.
Выртатăн пĕр чĕнмесĕр, кĕç тăрассăн,
Утасшăн пек тăван ене савса.

Паян та эп сана умрах куратăп,
Каймастăн манăн асăмран нихçан.
Тӳлек сассупала, ак, эс ыйтатăн:
«Çут тĕнчере епле-ха пурăнан?

Çумра тус-тантăшу чылай-и санăн?
Пĕр хăвшăн çеç эс тăрăшмастăн-и?
Çын ĕç-хĕлне сума сăватăн-и?..»
Ыйту çине ыйту, час хуравлаймăн.

Масар.
Сăваплă вырăн чĕррисемшĕн, —
Никам хăй урипе кунта килмест,
Яланлăха юлассине сисмест.
Пулсан та, пысăк ял пек вăл çынсемшĕн.

Мана каçарччăр çак танлаштарушăн.
Çапах ыйтас килет чĕррисенчен:
Пурнатпăр-и пĕр-пĕринпе татуллăн,
Туятпăр-и çын тивĕçне куллен?

Чăвашăн ыр енне — сăпайлăха,
Атте-анне пилленĕ сумлăха
Хăш чух манса каймастпăр-ши? Хăр-харшăн,
Пур вак-тĕвекшĕн сапалатпăр мар-ши?..

Масар.
Сăваплă вырăн вăл кашнишĕн.
Çапах та тунсăх, тунсăх чĕрере.
Кун пуçланнишĕн, сар хĕвел ăшшишĕн
Яваплă эпĕр çакă тĕнчере...

Кунта ман тантăшсем те пур, канаççĕ.
Чăрмантарас шут çук-ха вĕсене.
Шухăшăмсем чарусăррăн кумаççĕ,
Мĕскершĕн шеллемерĕç хăйсене?

Пит хĕсĕк марччĕ-çке Турхан урамĕ
Йăмра шавне савса тăн-тăн утма.
Е тĕп килтен тухса çурт çавăрма
Çакна хăйсемсĕр халь камах хуравлĕ?

Пĕр вăхăтра ĕçке пит савнăран,
Çил-тăвăл тухнăн çемьесем арканчĕç.
Хăшпĕрисем касамата çакланчĕç,
Виççĕмĕшсем... выртаççĕ шăплăхра.

Масар.
Сăваплă вырăн вăл çынсемшĕн,
Унра — пулса иртнин кĕтрет çути,
Асаилÿ, кунçул йÿççи-тути,
Вĕри куççуль чакмасть кунта этемĕн.

Мĕнех, шăлне хăйрин эсрел-усаллăх,
Ÿсет, ав, пурпĕр çĕн ăру хастар.
Çынра вăй илтĕрччĕ хăйне сыхласлăх,
Вара сив вилĕм уншăн хăруш мар.

«Хам пурăнса юлас — ытти тĕп пултăр...» —
Тесе калакансем те пур, паллах.
Эппин, этем пĕр хăйшĕн çеç ан çунтăр,
Кÿрши пирки те ун шутламаллах.

Ма пытарас?
Кунта пулатпăр пурте.
Çапах мĕн пÿрнине йышăниччен,
Çав, леш... эсрелĕпе тĕл пуличчен,
Иртинччĕ теп тĕллевлĕрех ман пурнăç...

Аннем тăрать.
Ун пĕркеленнĕ пичĕ,
Хальччен çакна курман, — салху ытла.
Шеллес килет ватăскере ман питĕ,
Сисмесĕрех çĕре куççуль тумлать.

«Нумай кĕттермĕп, юнашар пур вырăн,
Чартакĕ хÿхĕм — иксĕмĕр валли.
Килсе выртасчĕ сан пата ман ыррăн,
Ку — пурнăçăн улăштарман йăли».

Сăмахсене калать те вăл пит лăпкăн,
Такам питрен çат çупнăн туйăнать,
Чунра тем татăлать, тем тăвăнать.
Анчах... йĕри-тавра тÿлеклĕх, тăплăх.

Хам сывă чух килсе пуçа эп тайăп
Ачамсемпе сан тăпруна, атте.
Ана калатăп:
«Эс ан туччĕ айăп,
Халь каймалла: пускил, тăван кĕтет...»

VII

Ял пурнăçне аван пĕлес тесессĕн,
Тĕпчемелли, сăнамалли чылай.
Ват çынсемпе эс ăшшăн пуплесессĕн,
Хăв ăстăнна пуянлатан самай.

Анчах хăшпĕрисем пит мухтанаççĕ:
«Эх, ĕлĕк чух, — юрлаççĕ пĕр кĕвве, —
Йăли-йĕркийĕ çыхăннăччĕ тачă
Тăван çĕрпе пĕр уйрăлми тĕвве».

Сĕт çумăрĕ çеç ĕлĕк çунă имĕш,
Кулач та пыл нихçан кайман умран.
Çулталăк тăршшĕпех-мĕн пулнă çимĕç,
Тумланнă хальхинчен те чаплăрах.

«Тырри гектар пуçне мĕн чул тухатчĕ?» —
Ыйтатăп эп юмах яраканран.
«Пĕлсех каймастăп та — анчах чылайччĕ»,—
Хыçать вăл ĕнсине
Аптранăран.

«Çич-сакăр центнертан ытла пулман-çке,
Пухаççĕ халĕ пилĕк хут нумай.
Вĕт шăллă çурлана та ĕнтĕ манчĕç,
Çав вăхăта кирлех-ши мухтама?»

Ыйтатăп:
«Ĕлĕк пенси, тен, илетчĕç

Сире халь панинчен те ытларах
Е выльӑх-чӗрлӗхӗ чылай ӗрчетчӗ,
Хур-кӑвакал нумайччӗ-и, ара?»

«Чӗлхен шӑммийӗ ҫук, пӗл виҫене эс! —
Ҫӑвар уҫнӑскере кӳрши чарать. —
Сисместӗн-им, айван, шахвӑртнине те,
Ним шухӑшсӑр ача пекех павран».

Аптранипе леш:
«Эй, ҫапла пулмасӑр,
Чӑнах, ара, кум тӗрӗс сӑмахлан...»
Вӗсен ятне хӑварӑп каламасӑр,
Пит айӑплаймӗ уншӑн вулакан.

Утатӑп малалла.
Тӑрсах сӑнатӑп
Шлипшур ҫырмин вӗр-ҫӗнӗ кӗперне.
Бетон урийӗсем ват юмана та
Кӗвӗҫтерме пултарӗҫ хӑш чухне.

Ӑста платник Элеш Якку Антунччӗ,
Унран канаш ыйтатчӗҫ-ха ҫынсем.
Кирек ӑҫта ертӳҫӗччӗ, маттурччӗ,
Нумай вӑл ҫапнӑ йывӑҫ сӑвайсем.

Антун тете те пит мухтатчӗ пулӗ
Ҫак илеме — хӑй пурӑннӑ пулсан.
Вӑл тунӑ кӗперсен кӗскеччӗ ҫулӗ, —
Бетонлипе епле танлаштаран?..

Кӑшт леререх тимӗрҫ лаҫҫи ларатчӗ,
Сунтал сасси янратчӗ ян та ян.
Кил-тӗрӗшри вак-тӗвеке юсатчӗҫ, —
Ирпе-каҫпа ҫын татӑлман кунтан.

Хашкатчĕ вăл, чахутка чирĕ ернĕн,
Ӳпки — кив вĕркĕч — пит хавшанăран,
Вĕри вучах — чĕри — лăш курманран.
Ялйыш унпа миçе çул йӳнеçтернĕ:

Лашасене хĕлле таканлаттарнă,
Сӳре-плугне кун панă çĕнĕрен.
Ытлашшипех вăл тивĕçне тултарнă,
Ăна пăснишĕн кăшт сӳлет чĕре.

Ыйтатчĕ-шим вăл пысăк енчĕк хăйшĕн
Шыв хĕрринче ларнишĕнех пĕччен?
Такам алли ăна ишме, ав, хăйнă,
Пĕлмест халь ун çинчен иртен-çӳрен.

Вăл кивĕ имĕш — кирлĕ мар хальхаççăн,
Чупса анмасть сукмакĕ ун патне.
Ку вырăнта шур хурăнсем хунаççĕ,
Кармашнă май тăп-тăрă тӳпене.

Юнашарах пĕр мастерской ларатчĕ,
Салма Кĕçтук ĕçлетчĕ пĕр-пĕччен.
Сĕтел-пукан, çĕн рамăсем тăватчĕ
Çункав шăршийĕпе киленнĕçем.

Астаçăсем, чăнах, ялта нумайччĕ,
Вĕсем нихçан та кăкăра çапман.
Сăпайлăхпа çеç палăрса тăратчĕç, —
Чăвашăн мухтанас йăла пулман.

Уй-хирсенче акатчĕç селĕм кантăр,
Тĕртетчĕç пир.
Ĕç хатĕр — йывăçран.
Катка-пичке, чӳлмек-чĕресĕ, алтăр —
Хресчен хăй тунă — ал усса ларман.

Вĕсен вăрттăнлăхне алла илменшĕн
Пит хĕрелет те, халь тин мĕн тăван?
Çак айăпа тӳр килĕ пĕтермешкĕн:
Патшалăх май туса парать, аван...

Сăрт тăрринче çил армансем ларатчĕç,
Çĕртен кĕç-вĕç хăпса вĕçес тесе.
Кĕрпе çуратчĕç, çăнăх авăртатчĕç,
Чĕриклететчĕç йывăç çунатсем.

Ялйышшăн ютчĕ-шим вĕсен сăнарĕ,
Йăлăхтарса çитерчĕç-шим çаплах?
Çак шухăшсем ăша пĕрмай вăркатрĕç,
Хурав кĕтсе эп чарăнтăм тăпах.

Ыр тунине часах манатпăр мар-ши
Эпир, çĕннишĕн пит çунакансем?
Аваллăхран кирлех-шим йăлт хăпмашкăн,
Мĕн калĕç-ха кайран ачамăрсем?

Владимир, Суздаль таранах каятпăр
Илĕртнĕрен унти шедеврсем.
Килте вара — мĕн пуррине вататпăр,
Кайран: пулнах-ши тетпĕр палăксем?

Ан тив, хăлаçланса арманĕ лартăр,
Тимĕрç лаççи те пултăр çавăнтах.
Хĕн пурнăçăн сăнарĕ те упрантăр,
Пире вăл асилтертĕр тăтăшах:

Хĕвел шевлиллĕ тăнăçлăх сасартăк
Юмахри пек хăй тĕллĕнех пулман.
Кăвак хуппи те тертсĕр уçăлман,
Килес ăру çакна йăлтах ăнлантăр.

Çакна туйса тӑрсассӑн, тен, пушанмӗ
Ача-пӑча сассиллӗ хӳхӗм пӳрт.
Çуралнӑ кил хӑй ӑшшине чакармӗ,
Мӗн-ма тесен телей кунта та пур.

IX

Куллен-кун улшӑнать ял сӑн-сӑпачӗ,
Пурнаканни, тен, пит туймасть çакна.
Кассерен çӗн çурт, ав, купалаççӗ,
Кайран тӑрлаççӗ тимӗрпе ӑна.

Пӗр кӗвӗллӗн янрать мотор кӗрлевӗ,
Каçчен шӳт-кулӑ илтӗнет кунта.
Кам çурт тӑвать — кунçулӗ ун тӗллевлӗ —
Алхапӑл каймӗ пӑрахса ялтан.

Йӑва çавӑракан килпуç кӗрнеклӗн
Мӑнаçланса çӳрет картишӗнче.
Тӑн-тӑн пусать вӑл, улӑп пек, тӗреклӗн,
Малашлӑхӗ кунта ун, çӗр çинче.

Хӑрми тымар ярать çав çын яланлӑх
Йывӑрлӑха çӗнсе пырать ялан.
Пӗлетӗп эп: унра çук çӑмӑлттайлӑх,
Çак ырӑ ен çӗклет ман кӑмӑла.

...Эп ӳснӗ чух кив пӳрт ялта нумайччӗ,
Витетчӗç улӑмпа лупассене.
Çак сӑнарсем куçран халь йӑлт çухалчӗç.
Шеллетӗп-им? Çук! Çук! Çӑва патне!

Сахалӑшӗн çурт-йӗр йӑл-ял çиçетчӗ,
Йӗри-тавра эреш тултан пӑхсан.
Шалта — саксем те пӗр сӗтелччӗ,
Савӑт-сапа — тӑмран та йывӑçран.

Атте калатчĕ (ман асран каймаҫҫĕ):
«Май ҫукчĕ, шут тытсан та, сад чĕртме.
Ҫам улмуҫҫи лартать — налук хураҫҫĕ,
Ҫасаттăмăр, пĕлмен пек шеллеме.

Ҫав йывăҫсем, ўпкелесе пире,
Юлашки хут хаш сывласан, тўнетчĕҫ.
Мĕскĕнсене хытах хĕрхеннĕрен,
Ҫуҫсем, шур илнĕ пек, тĕтреленетчĕҫ...»

Ҫилти тик-такĕ чарăнса ларсассăн:
«Униҫĕмсен сехечĕ тĕрĕсрех». —
Мана пĕлсе килме хушса ярсассăн,
Чупаттăмччĕ вĕсем патне ирех.

Мăч-мăч краҫҫын ҫутипе эп вĕреннĕ,
Вунҫич ҫулччен унран пач уйрăлман.
Ҫав йўнĕ шĕвеке перекетленĕ
Укҫи-тенки шав хĕсĕк пулнăран.

Вĕр-ҫĕн ҫурта пушар тĕп тунине те
Ҫулсем иртсен те манас ҫук нихҫан.
Тавах, ҫав терт-нуша хыҫра халь тетĕп,
Ҫапах вĕсен мĕлки каймасть умран...

Юмахлăхра халь пурăнатпăр мар-и?!
Сăна тĕпчевҫĕ куҫĕпе, юлташ.
Паянхипе епле-ха танлаштарăн,
Аса илсен ҫав иртнĕ вăхăта?

Ҫилсеренех Ильич лампи, экранĕ,
Диван-кравачĕ, тĕрлĕ гарнитур.
Газ баллонне те, авă, курсе панă,
Юп-ырлăхне курмашкăн пурте пур.

Чӳречерен шаккать улма турачӗ,
Сӗнет хӑй ҫимӗҫне сар кӗр ҫитсен.
Ӳркенменнин ытла та хӳхӗм сачӗ,
Вӗллийӗсем те пахчинчех хӑйсен.

Пыл хурчӗсем сӗрле-сӗрле вӗҫеҫҫӗ,
Чечек ҫинче пухаҫҫӗ пыл-нектар.
Ӗҫчен ҫынна вӗсем асилтереҫҫӗ:
Ҫам наян мар — ҫав курӗ пархатар.

Х

Ҫил ачисем чупсан-чупсан лӑпланчӗҫ,
Пытанчӗҫ, ахӑр, тулӑ пуссине.
Ҫӳл тӳпере тӑри юрри шӑранчӗ,
Сӑнанӑҫем ҫынсем ӗҫленине.

Тӑван уй-хир, сывлатӑн лӑпкӑн, канлӗн
Киленӗҫ туйӑмпа.
Хӗрарӑм пек.
«Ҫӗр хӗсӗртен курайман ырлӑх тек», —
Тесе сана паян хӑйса кам калӗ?

Ӑҫта ан пӑх: ӗҫченӗн ӗҫӗ сапӑр,
Ыраш, пӑрҫа, сар тулӑ ҫитӗнет.
Тулли пучах:
«Эй, сӑвӑҫ, мухтамасӑр
Манран иртме пултарӑн-и эс?» — тет.

Лайӑххине, паллах, йӑлт асӑрхатӑн,
Иртен-ҫӳрен курать хӑй куҫӗпе.
Анчах, уй-хирӗм, шухӑша путатӑп,
Килӗшнӗрен поэт каланипе:

«Мӗскер вӑл ясмӑк, ачасем пӗлмеҫҫӗ.
Пӑри те вир халь ҫук уй-хирсенче.

Анчах та пăттине килĕштереççĕ,
Час-час вăл пăсланмасть сĕтел çинче».*

Хуратулне аксан та тертлĕ тетпĕр,
Саватпăр мар-ши çăмăлрах çула.
Такам туса парассине кĕтетпĕр,
Çак чир ан кайтăрччĕ шалтан шала..

Ахальтен мар çĕре эп танлаштартăм
Çынна кунçул пиллен хĕрарăмпа.
Вăл чунлă та ăшпиллĕ, сис, юлташăм,
Хăй ĕмĕрне этем тăсать унпа.

Эппин, пĕр-ик ача ӳстернĕ евĕр,
Çур тăлăх пек ан курăнтăрччĕ хир.
Пăри те хуратул çĕклентĕр евĕк,
Çĕр-аннерен вăй илтĕр каç та ир...

Ĕçчен ушкăнпала кĕç тĕл пулатăп,
Паллас шутпа тĕсетĕп хăшпĕрне.
Чăваш йăлипеле:
«Салам, вăй патăр!» —
Тесе калатăп çывăхрисене.

Кунтах, ав, председатель, манăн тантăш
Ялйышăн хисепне тивĕçнĕскер.
Унпа сăмахлама эп тапрататăп,
Ана-кăна ыйтатăп: йăлт пĕлтер.

XI

«Ĕçлекенсем çитмеççĕ çав хальхаççăн, —
Тет Ляпкин, тарăн шухăша путса. —
Шкул пĕтерсен, яшсем, хĕрсем каяççĕ
Хуласене.
Юлмаççĕ колхоза.

---

* Г. Ефимов сăвви.

Ҫӗҫех ача садне хута яратпӑр,
Юлас тесен, хваттерӗ те пулать.
Асфальтлӑ ҫул та васкасах тӑватпӑр,
Ял пурнӑҫӗ куллен лайӑхланать.

Тӗштыррине пухса илме ансат-ха,
Ҫӑшман та ҫӗрулми тума асап.
Ҫаҫалӑкра ӗҫлет механизатор,
Ҫумкурӑкне тӑрать вӑл тасатсах.

Вӗсем кӑна-и?
Эпӗ те пай илнӗ,
Ман инженер та, — вӑл кулать чунтан. —
Хӑй ҫемйипе, ав, агроном та килнӗ,
Ветеринар та, скотник та кунтах».

Чӑн-чӑн ниме!
Эппин, ӗҫ-пуҫӗ ӑнтӑр,
Ҫумкурӑкӗ тасалтӑр уй-хиртен.
Рет-ретӗн симӗс ҫутӑ ҫунтӑр йӑлтӑр,
Ӑна ан пустӑр йытпырши, пиҫен.

«Тавах шкула, чӑнах та, пулӑшаҫҫӗ, —
Тет председатель, сӑмахне тӑсса. —
Ӗҫе пӗчӗккӗллех, кур, хӑнӑхаҫҫӗ,
Вӗсемсӗр ним тӑваймӑн, иҫмасса».

Ял пурнӑҫӗ кичем тет ҫамрӑксемсӗр,
Ӑна туятпӑр хамӑр та аван.
Малашлӑх пуш пучах пекех вӗсемсӗр,
Ҫаяканни каять ҫав, мӗн тӑван...

Ҫапах пуҫа усмастпӑр, тӑрӑшатпӑр,
Путрет меслечӗ вӑй илет ҫуллен.
Ӗҫчен ҫынна кирек хӑҫан чыслатпӑр,
Чӑн хисепе кашни тивӗҫлӗрен.

Палăрнисем илеççĕ орденсем,
Ялта вĕсем халь пурĕ вуннăн.
Чылайăшĕн çиçеççĕ медальсем,
Уявсенче клубра лараççĕ сумлăн.

Ывăлĕсем те, чăн та, паттăр кайкăр,
Çарта-çке пулнă — Афганистанра.
Пĕрне вилсессĕн панă «Хĕрлĕ Çăлтăр».
Перлов Володя, вăл каймасть асран.

Фашист йăхне тахçан аслашшĕ унăн
Тустарнă вăйлăн хыт курайманран.
Мăнукĕ те унран кая юлман,
Хăй кунçулне вăл хунă тăнăç куншăн.

Упрать савса ялйышăм ун ятне,
Ăна аса илсе эп шăп тăратăп.
Хăюллăскер тухать те куç умне,
Чысне-сумне яманшăн савăнатăп.

Володя шăллăм, хумханса калатăп:
Эс юн тăкни ахаль сая кайман.
Куллен-кун лăпланаççĕ халь унта та,
Тупать çĕн çул-йĕр пурпĕрех афган.

Тĕнчен нуши-хуйхи, ун йӳçĕ тарĕ
Яшсемшĕн нихăçан та ют пулман.
Инкек çитсен, пĕр çын пекех патваррăн
Çĕкленĕç кар.
Эпир — хастар йăхран!

XII

Юратнă ялăм, сан сăнна сăнарăм,
Йăмран салху шавне ăша хывса.
Пăшăрханса та шантарса каларăм:
Нумай кĕттермĕп, таврăнăп часах.

Юратнă ялăм, анлă, ирĕк хирĕн
Сар хумĕ лăпкăн-лăпкăн куçнăçем
Кунта çуралчĕ шухăш, вăл пит çирĕп:
Нумай кĕттермĕп, таврăнăп кĕçех.

«Тăван çĕре мансан, юп курмăн эсĕ...» —
Çак сăмахсем вырнаçрĕç чĕрене.
Юлташăм, эп те, эс те килмесессĕн,
Çĕнетĕ кам-ха пирĕн ял сăнне?

Юратнă енĕм, эсĕ чун йыхравĕ,
Çул-йĕрĕм паллă: пулăпăр пĕрле.
Эп таврăнсан, ĕçчен тăри шăнкравĕ
Саламлĕ уççăн сарă хĕвеле.

*1987—1988 çç.*
*Турхан — Шупашкар*

## ТУРХАН ХУДОЖНИКĔ

1891 çул. Выçлăх çулĕ

Инкек тискеррĕн хуçаланнă
Қашни ялта, кашни килте.
Пĕр хĕрхенӳсĕр вăл сăрланă
Хура тĕспе чылай пите.

Умри сăнсем ытла хăрушă:
Виле, виле çине-çине.
Çуртсем пит тăлăх та пуш-пушă,
Хуçийĕсем — масар çинче.

Чиркӳ янравĕ — чан сасси те —
Қĕтсе илмест чылайăшне.
Асатнă ял хапхийĕ витĕр
Асапланса вилнисене.

Хресчен турра пит тархасланă:
«Çак тамăкран мана çăлсам!»
Анчах илтмен леш, çил уланă,
Выç кашкăр евĕр хăратса.

Пĕртанлăх, туслăх тенине те
Нумайăш чухласах кайман.
Қун пек пулсан, епле çĕнетĕн
Хăв пурнăçна тĕпрен, тăван?

Пуян выç куçлă пулнă тетпĕр,
Аса илсе çав вăхăта.
Пĕчченлĕхе ĕненнĕрен-тĕр
Ĕçчен хĕн курнă-çке пайтах.

Лупасĕ, лаçĕ е кив пӳрчĕ,
Йăлт улăмпа витнĕскерсем.
Çаплах ăна сехмет çеç пӳрнĕ,
Аран пурнать йӳнеçтерсе.

Ăçта ан пăх: вĕри куççулĕ,
Ăçта ан пăх: тăлăх-турат.
Нушаллă-тертлĕ çын кунçулĕ,
Пĕр улшăнми саманара.

Çаплах шăпи-хуйхи чăвашăн
Ламран лама куçса пырать.
Ҫирек хăçан йăхне тăсасшăн,
Ҫирек хăçан шанать ырра.

Е кĕвĕ хыççăн кĕвĕ шуххăн
Çуралнă халăхра, пĕтмен!
Упраннă вĕсенче пин шухăш,
Хистенĕ хĕн-хура çĕнме.

Мĕн чухлĕ ятсăр-сумсăр юрăç.
Художник, сăвă çыракан.
Ҫашнин пит хĕсĕк пулнă пурнăç —
Ăмсанчăксем-çке çул паман...

Ун чух вăл вунпĕр çул тултарчĕ,
Тавах, вилмерĕ выçлăхра.
Анчах ури пит шыçнăран
Хура пӳртрен тухмасăр ларчĕ.

## Пылчăккасинче

Халь паллашма та вăхăт çитрĕ
Тинех, ак, пирĕн Лекçейпе.
Ачи йăваш, анчах та чирлĕ,
Пит палăрмасть вăй-халĕпе.

Хура çӳçне шакла кастарнă,
Ан пыйтăлантăрах тесе.
Салху куçĕсенче пытаннă
Ачалăхăн ĕмĕчĕсем.

Ҫассан, юн тухмĕ тенĕ евĕр,
Сăн-пичĕ питĕ шуранка.
Çуралнă та курмасăр евĕк —
Вăл пурăнать, мĕн тăвăн-ха?

Ҫилте Лекçей тесе чĕнеççĕ,
Ача-пăча урăхларах:
«Уксах» е «Ҫукăль» йĕкĕлтеççĕ,
Вăййа хутшăнманран пачах.

Удел шкулне çӳрет типтерлĕн,
Кĕçех ăна вăл пĕтерет.
Ерçӳллĕ чух тăвать ӳкерчĕк,
Асталăхĕ куллен ӳсет.

Вĕсен касси тӳлек, йăмраллă,
Анчах шыв-шурлă, лачакаллă.
Тулли лавпа лакса ларсан,
Миçе хут тĕнĕл хуçăлман?

Миçе хутчен хресчен ылханнă
Ҫунти çулпа иртсен аран.
«Пылчăккасси» тесе ят панă
Çак урама юратманран.

Юнашарах Шлипшур çырми те
Нӳрĕклĕхне шавах сарать.
Урамĕ айлăмра çав питĕ,
Çулла та сулхăн çеç тăрать.

Ҫирек хăçан та сивĕ сывлăш,
Е сĕр-сĕрлет шăна-пăван.
Чире пула Лекçейĕн сывлăх
Ҫунта хавшанă ачаран.

Ват çын шăмшакĕ евĕр туйнă
Йĕпе-сапаллă кунсене.
Хăрах ури пит шыçнă унăн,
Ҫичемлĕх пуснă чĕрине.

Çапла пулин те, çамрăк Ҫокель
Хăй вăхăтне сая яман.
Ҫӳрши анкартине тăксан кĕл,
Васканă унталла аран.

Йывăрлăхра вăй-хал çитерне
Сирсе пыма чăрмавсене.
Вăл кăмрăкпа куллен ӳкернĕ
Ун чух хăма татки çине.

Терт тӳснĕрен çав ытлăн-çитлĕн
Ашпиллĕхе пачах курман.
Хура кив çурчĕ те — чăн читлĕх —
Сыв мар çынна ниçта яман.

Самайлансан, çухатнă канăç,
Шлипшур юханшывне пăхса.
Шур хут листи çине сăнланă,
Ун юххине кăмăлласа.

Вăл сиснĕ, çын, чирлет пулин те,
Лайăххине кĕтмеллине.
Çак шыв та, ав, чăрмавлăх витĕр
Еплеваскать Пăла енне.

**Чиркӳре**

Илемлĕ тăрăхра вырнаçнă
Ик-виç урамлă ял — Турхан.
Тавралăхпа пĕччен калаçнăн
Сасне парать чиркӳ: ян, ян!

Уй-хир, вăрман ăна тăнлаççĕ,
Итлеççĕ çывăхри ялсем.
Уявсерен кĕлле васкаççĕ
Тусанлă çулпала çынсем.

Уксах-чăлахăн хăйĕн шухăш:
«Эх, сываласчĕ чир-чĕртен».
Чухăнраххи: «Хĕнрен эп тухăп
Çӳлти турри çилленмесен».

Ылтăн тĕспе çиçен хĕресĕ
Асамлăн курăнать, таса.
Вăл туйăнать хута кĕрессĕн,
Чун-чĕрене пăлхантарса.

Чиркӳ тавра çӳл решеткеллĕ
Тирпейлĕн çавăрнă карта.
Çилпе кашлаççĕ шерепеллĕ
Шур хурăнсем ир-каç унта.

Картишĕн хĕрринче пытарнă
Ялти чиркӳ пупĕсене.
Хĕресĕсем, çынна хăмсарнăн,
Шиклентереççĕ кашнине.

Çакна Лекçей кăштах ÿссессĕн
Ÿкерĕ-ха шур хут çине.
(Унта халь клуб, иртен-çÿреншĕн
Яри уçать хăй алăкне.)

Ун ашшĕн — Кукăль Ахваниçĕн —
Трахомпала чирленĕрен,
Пĕр куçĕ пит илемсĕр, пиçĕк,
Çапах тăн-тăн кĕлеткерен.

Ансат е йывăр ĕç пуçлать те
Вĕçлет ăна пĕччен хăех.
Çак ен ачисене куçать-тĕр,
Вĕсемшĕн те ĕç хисепрех.

Тĕн сĕрĕмне çеç пăхăнмашкăн
Ял халăхне нуши хистет.
Чиркÿ пупне вăл юрамашкăн
Вырсарникун кĕлле çÿрет.

«Çÿлти турра нихçан ан манăр,
Пулас килсессĕн çăтмахра.
Пĕр кун ан иртті̆р сăхсăхмасăр,
Сăвап çеç пулĕ хăвăра».

Куллен çакна Лекçей итленĕ,
Тăнланă ашшĕн сăмахне:
«Тур çырнинчен иртеймĕр, — тенĕ, —
Тăвас пулать пуп хушнине».

Çурта лартса кĕлтумалла-и
Е типĕ тытмалла кĕçех?
Ваттисене асăнмалла-и, —
Юлман ун ашшĕ çынсенчен...

Ача, ҫӑнах та, пит именчӗк,
Ҫаланине хыт ӗненет:
Ҫак чиркӗве те вӑл иленчӗ,
Ахваниҫпе пӗрле килет.

Ҫӑсӑкланса сӑнанӑҫемӗн
Ҫынсен тумне, сӑн-сӑпатне,
Йышланчӗҫ ыйтусем Лекҫейӗн,
Килте аптратӗ ашшӗне:

«Мӗн-ма тиечукпа ҫав пупӑн,
Вӑрман улпучӗн тум хитре?
Мӗн-ма ялти пуян Хветутӑн
Укҫи нумай, тет, ҫӳпҫере?

Мӗн-ма вӗсен ачин Ваҫлейӗн
Ҫӗпи-тумтирӗ пусмаран?..»
Астӑн куллен ун ҫивӗчленӗ
Танлаштарса сӑнанӑран...

Ялти чиркӳ.
Лекҫей кунта-ши
Туйма пуҫларӗ илеме?
Ку ҫуртшӑн ют-ха кулӑ-ташӑ,
Анчах май пур хӗпӗртеме:

Епле чуна уҫса юрлаҫҫӗ
Хорта ҫап-ҫамрӑк ачасем!
Темле асам хӗлхем сапаҫҫӗ
Йӗри-тавра ҫуртийӗсем.

Турӑшӗсем мӑнаҫ, илемлӗ
Пӑхаҫҫӗ чӗрӗ пек куҫран.
Ҫартинисем кашни тӗллевлӗ —
Усал вӑй парӑнать ырра.

«Шăп çакăн пек ман ӳкересчĕ, —
Шутлать ача, ĕмĕтленсе, —
Хура пӳрте илемлетесчĕ,
Кӳршĕсене тĕлĕнтерсе».

Çĕн юрăсем итленĕ майăн
Лекçей ĕмĕтпеле вĕçет.
Ак вăл тĕреклĕ, сывлăх лайăх,
Шухăшĕпе таçта çитет.

«Аминь! Аминь!» — илтсен ун-кунăн,
Вăл таврана пăхса илет.
Ха, чиркӳре-иç, урмăш пупăн
Сасси çеç хăлхара кĕрлет.

Хăранипе ача алхапăл
Чĕркуçленет те сăхсăхать.
Кун пек чух пупăн кăмăл сапăр, —
Кĕлтăвана вăл кăмăллать.

Лекçей кунта хăйне хăй манчĕ,
Сăнарĕ ăстасен ĕçне.
Ун чунĕ кăйкăрла вăранчĕ,
Вăл ăнтăлчĕ Илем патне.

## Шкулта

«Ку чирлĕ Лекçейрен кураймăп
Ӳссессĕн те пархатарне.
Кайран мана ан тутăр айăп,
Вĕрентĕр хăть çыру ĕçне.

Телейсĕр-çке хресчен кунçулĕ
Хутла пачах тĕшмĕртмесен».
Çак шухăш тĕвĕленчĕ пулĕ
Ун ашшĕн пуçĕнче куллен.

Тул çутăлсан, апатлансассăн,
Ача пир сумкине çакать.
Унтан пĕччен, пит васкамасăр,
Шыв хĕрринчи шкула утать.

Унта ларать пĕр чалăш çурт,
Вăл туйăнать кĕç йăванассăн.
Ват çын пек тӳснĕн вăл терт-хур
Шыв юххине сăнать йăвашшăн.

Ик алăк, икĕ пĕчĕк пӳлĕм,
Виç чӳрече кашниййĕнче.
Хĕлле лармашкăн кирлĕ тӳсĕм,
Çил шăхăрать çурăксенче.

Çапах та вăл пĕлӳ вучахĕ,
Кашни ачашăн савнă кил.
Аш илĕртӳлĕхĕ ун чакмĕ,
Куллен-кун йыхăрать пек: кил!

Чăвашсемпе, ав, вĕренеççĕ
Ирçе те вырăс ачисем.
Юнашарти ялтан килеççĕ
Арапуçсем те шăхачсем.

Ялти «вĕтурасен çарпуçĕ» —
Анаткасри шух Тихxăн та
Лексейпеле ларать шкулта —
Ачалăхри чи çывăх тусĕ.

Тăрăхласа ят парасси те
Ялта йăл илнĕ ачаран.
Витлев сăмах таçта та çитĕ,
Мăн çын та хăпаймасть унран.

Тус-юлташне чӗнеҫҫӗ: Уҫӑп.
Хӑйне те Кукӑль теҫҫӗ шав.
Ятсем хушамата кӗҫ куҫнӑ,
Хӑть эс ӑна хурла, хӑть сав.

Пӗр-пӗр пуҫтах кӳрентерсессӗн
Вӑйсӑртарах ачасене,
«Утамана» евитлесессӗн,
«Тӑн панӑ» леш айӑплине.

Шӑнкрав янрать те — йӑрӑс пӳллӗ
Сергей Ильич класа кӗрет.
Паян ун кӑмӑл ҫӗкленӳллӗ,
Килти ӗҫе вӑл тӗрӗслет.

Доска умне чӗнет ӑшпиллӗн:
«Тухсам, Лекҫей, эс ан вӑтан».
Леш сӑввине калать аван.
«Маттур, маттур, лартатӑп «пиллӗк».

Ачасене сӗнет: вӗренӗр
Пур предметпа Лекҫей пекех.
Пӗлӳ пулсан, мана ӗненӗр,
Кунҫул тӗллевлӗ, хитререх».

Унтан пуҫлать вӑл васкамасӑр
Ӑнлантарма ҫӗн темӑна.
Итлеҫҫӗ ачасем пӗр сассӑр,
Ҫапла ӑс-хакӑл пухӑнать.

Тӑхтав вӑхӑтӗнче шӑв-шав ҫеҫ
Куллен кӗрлет картишӗнче.
Шух ачасем пит тупӑшаҫҫӗ
Пӗр-пӗринпе вӑйӑсенче.

Ула-чăла пиртен çĕленĕ
Тумтир кашнийĕнех вĕсен.
Улт пушăтран çăпатисем,
Анчах та çĕнĕ мар, кивелнĕ.

Лекçей кунтах, сывлать вăл ассăн,
Йăмра çумне пырса ларать:
«Эх, ман сиккелесе вылясчĕ»,
Анчах ура шыççи чарать.

Хĕвел çинче йăл çиçтереççĕ
Шкул ачисем саплăксене.
Шăнкравчченех тĕрткелешеççĕ,
Манса кайса выçварлине.

Чăтма çук йывăр пурнăçра та
Ачалăх вăл ачалăхах.
Çак кунсене умра куратăн,
Ӳссессĕн те вĕсем асрах.

Сергей Ильич Очков учитель,
Чĕмпĕр шкулне пĕтернĕскер,
Лекçей ăсне кӳрет çĕн витĕм,
Хавхалатать ялан: ӳкер.

Хăйне нихçан мăнна хумасăр,
Сукмак хывать ача чунне.
Ĕçлет вара хăй лăш курмасăр,
Уçать пĕлӳлĕх тĕнчине.

Вĕрентекен! Эс кирек камшăн,
Кирек хăçан та — Гиппократ.
Çут тĕнчери чи сумлă ят,
Ача-пăчашăн тăрăшатăн.

**Ĕмĕтпе чăнлăх**

«Хĕл хырăмĕ апшур», — каланă
Чăваш çынни мĕн авалтан.
Ĕмĕрĕнче курман вăл канăç
Чунпа хавшаклă пулнăран.

Ĕçе уйăхсене те «кӳлнĕ»,
«Ака», «Çурла» ятсем парса.
Ана çинче тар тăкнă, тӳснĕ,
Суха туса, кĕлте çыхса.

Ĕмĕчĕсем çеç шутсăр ырă:
Хур-кăвакал картиш тулли,
Ăш витере ĕне те сурăх,
Кĕлетĕнче тырри, хăмли.

Куç савăнмалăх пурлăх, курччĕ:
Тăпăртатса тăрать лаши.
(Çук, кирлĕ мар ăна пушши)
Чусран хуралтăсем те çурчĕ...

Эх, ĕмĕт, ĕмĕт. Чун йăпатмăш,
Санпа çеç кăмăл çĕкленет.
Хресченшĕн эс, чăнах, тухатмăш,
Курайĕ-ши вăл ырлăхне?

Ялан ăнса пулмасть тырпулĕ,
Ик-виçĕ чăх картишĕнче.
Ырхан лаши кавлет тип улăм,
Утти пач çук лупас çинче.

Килте ачи йĕрет: пит выçă,
Аптранипе пӳрне ĕмет.
Вулăсрисем пуçтарнă хырçă,
Татах ыйткалама тивет...

— Лекҫей, итлес килет-и санăн
Куккуклă сехете?
— Аҫта?
—Пур тĕкĕр,—Тиххăн шахвăртать,—
Хăв сăн-питне пăхма пултарăн.

Ана юлташĕ пит васкатрĕ:
— Ан йăралан, тумлан часрах.
— Суятăн пулĕ?
Леш каларĕ:
— Манпа пырсан — хăвах куран.

Вĕсем хыпаланса утаҫҫĕ
Ял варринчи шатрун ҫурта.
Ку вулăс пӳрчĕ-ха, хальхаҫҫăн
Хресченĕ татăлмасть унтан.

Шалта чылайăн.
Хăр-хăр сасă,
Ана илтсен, чун сӳлетет.
Ҫынсем тăраҫҫĕ калаҫмасăр,
Кунтах Лекҫейĕн ашшĕ те.

Чăнах та, тĕлĕнтермĕш мар-и,
Куккукĕ авăтать пӳртре!
Тав Тиххăна, улталамарĕ.
Ҫут тĕкĕр те пур кĕтесре.
Уретник вĕсене курсассăн
Кăтартрĕ алăк хăлăпне.
«Пошел! Пошел!» — тесе усаллăн
Хӳтерчĕ вăл ачасене.

Пĕлес килет: мĕн-ма уретник
Ачасене кĕртесшĕн мар?
«Пăхма пулать чӳречерен те», —
Ик тус тухаҫҫĕ урама.

Çут кантăкран вĕсем сăнарĕç
Шалта мĕскер хăтланнине.
Унта саламатпа юнарĕ
Хаяр уретник çынсене.

Пĕрне вăл çапрĕ те çиллессĕн:
«Хăçан куланайна тӳлен?»
Хресчен, хăравçăскер, эрленнĕ:
«Парса татап, кăшт вăй илсен».

«Эх, манăн хăвăртрах ӳсесчĕ, —
Қалать кĕç Тиххăн юлташне. —
Хисеплеменшĕн çынсене,
Хăйне, хăйне тытса силлесчĕ».

(Ун шăпипе паллаштарасшăн
Хисеплĕ вулаканăма.
Ӳссессĕн, салтака кайсассăн,
Вăл пĕлнĕ чăнлăхшăн тăма.

Самара хулинчи пăлхавшăн
Сив Çĕпĕрти катăркăра
Улт çул тӳр килнĕ терт курмашкăн,
Қайран вăй хунă Донбасра.

Юп куртăр, тенĕ, ĕçлĕ халăх,
Қĕрешнĕ тĕрлĕ йăх-яхпа.
Хал çитнĕ палăрса тăмалăх
Чăтăмлăхпа, хăюлăхпа.

Большевиксен ретне тăрсассăн,
Пĕрмай ӳстернĕ пĕлĕвне.
Қив пурнăçа тĕпрен кăкласшăн
Пĕрре те шеллемен хăйне.)

Чышкисене вăл чăмăртанă,
Уретнике хытах юнать.
Лекçей те, ыйхăран вăраннăн,
Ķуçне-пуçне чарса пăхать.

Леш, хаярскер, выç куç, хуптарчĕ
Ик-виç çынна хурал пӳртне.
Ķайран та чылайччен хăмсарчĕ
Саламатпа хресченсене.

Лекçейĕн ашшĕ Ахваниç те
Ыттисемпе тухать пӳртрен.
Сăн-пичĕ ун шуралнă питĕ,
Алли-ури тăр-тăр чĕтрет.

Ăна курсан, Лекçей тĕпчерĕ:
«Уретник мĕншĕн пит усал,
Тăр-кăнтăрлах çынна хĕнерĕ,
Тăратăр пурте хăраса?»

«Ӳссессĕн, ывăлăм, ăнланăн,
Тӳлемелле-çке куланай.
Ăна йăлтах парса татманшăн
Тертне куратпăр яланах...»

Çак сăнарсем вырнаçрĕç хăвăрт,
Ыраттарса чун-чĕрене.
«Ķунçул, хресченшĕн ма эс тăвăр?» —
Лекçей шеллерĕ ашшĕне.

**Лашман хресченĕсем**

«Вăрман улпучĕ» тенĕ ĕлĕк
Чăваш вăрман тытакана.
Ăна курсассăн хывнă çĕлĕк
Ватти-вĕтти аякранах.

Кунта Левченко хуҫаланнӑ,
Кирек хӑҫан хӑй ҫеҫ тӳре.
Никамӑн та ҫук ырӑ шанӑҫ
Айӑплансан тухма тӳрре.

Кил-тӗрӗшре пурне те кирлӗ
Вутти, утти, кӑмпи, ҫырли.
Анчах та вӑл сыхлать пит тимлӗн
Пуянлӑхне пӗр хӑй валли.

Вӑрманӗ, чӑн та, питӗ аслӑ,
Вӗҫрен вӗҫе ҫын тухас ҫук.
Кашлаҫҫӗ йывӑҫсем мӑнаҫлӑн
Хунав ярса ҫул хыҫҫӑн ҫул.

Кӗреш юманӗсем пит ҫирӗп
(Карап тума юрӑхлисем).
Хӗн-хур кураҫҫӗ каҫӑн-ирӗн
Кунта лашман хресченӗсем.

Ах, ӗҫӗ! Канӑҫсӑр та йывӑр,
Ал вӑйӗпе ҫеҫ тунӑран.
Мӗн чухлӗ кирлӗ тӳсӗм, сывлӑх,
Пичке тумашкӑн юманран.

Ана кӑкран касса яма та
Виҫеллӗн, тикӗссӗн ҫурма,
Типсен, унтан хӑма тума та,
Чӑнах, пӗрре те ҫӑмӑл мар.

Анчах та унӑн чапӗ кайнӑ
Аҫтӑрханран Париж таран.
Ҫак тавара савса туяннӑ
Йӳн хакпала купса тавраш.

Улатăра ярсах тăраççĕ
Хăмаллă лавсене куллен.
Кунтан васкавлăн ăсанаççĕ
Чугун çулпа инçетелле.

Лекçейĕн пиччĕшĕ Иван та
Кĕрĕшрĕ лашмансем патне.
Аслисемпе ĕçлет пĕр тан вăл,
Кăштах пухасшăн укçине.

Хура пўртне часрах пăсасшăн,
Ун вырăнне çĕнни лартса,
Кăштах çын евĕр пурăнасшăн.
Тăрать çак шухăш вăй парса...

Апат леçме куллен чупаççĕ
Ял ачисем çаруранах.
Лекçей те Тиххăнпа хальхаççăн
Кайсах тăраççĕ вăрмана.

Кунта аван-çке, тĕрлĕ кайăк
Шăрантарать, ав, юррине.
Уç сывлăшпа киленнĕ майăн
Пухаççĕ пурте çырлине.

Çĕр айĕнчен тапать çăлкуçĕ,
Çĕн кĕвĕллĕн шăнкăртатать.
Канмасăр авăтать кукукĕ,
Кăмпи, пултранĕ: пух тет, тат.

Вăрман касакансен сăн-пичĕ
Ачасене курсан хавас.
Хăйсем ĕшеннĕ мар-и питĕ,
Шўтлеççĕ пурĕпĕр час-час.

— Хăçан-ха, Тиххăн, авланатăн?
Чупатăн пуль улахсене?
— Шур пир çине, тен, куçаратăн
Лекçей, эс сарă хĕр сăнне?

Сартутлă Тиххăн чăрсăр мар-и:
Сăмахшăн каймĕ кивçене.
Виç çыншăн та хурав вăл парĕ,
Хĕретĕ хăй сан сăн-питне:

— Халь иртерех-ха, ĕлкĕретпĕр,
Пулас хĕрсем хуп сăпкара.
Часрах ӳссе çитесчĕ тетпĕр,
Ытти пурнăçланать кайран.

**Çак эртелте ик тус паллашрĕç**
Сар вырăспа та ирçепе.
Хура тутарĕ те калаçрĕ,
Вăй илчĕ туслăх майĕпен.

Пĕр-пĕринпе ялан пайлаççĕ
Кил апатне те хурлăхне.
Хура вăрман шавлать ир-каçăн
Сăнанă май çынсен ĕçне.

## Левченкăпа паллашни

Çу кунĕнче Лекçей юратнă
Чечеклĕ çарана, хире.
Уйра ларан пĕччен юман та
Патваррăн курăннă, хитре.

Пучамасри варсем, çăлкуçĕ,
Хĕвелĕн çутинчи вăрман.
Е варкăш çилĕ ăшшăн, уççăн
Пите сĕртĕннĕ чух аван.

Эй, çутçанталăк! Вăй-хавалла
Хĕлле, çулла — кирек хăçан
Çынна паратăн эс хаваслăх,
Ăна мал ĕмĕтлĕ тăван.

Пулсан та самани пит йӳçĕ,
Лекçейшĕн эсĕ — ыр анне.
Черчен чунне кӳретĕн тӳсĕм,
Пиллетĕн хăвăн илемне...

— Килте юлмарĕ типĕ шанкă, —
Тет ашшĕ икĕ ывăлне, —
Хĕл вуттине тытма халь шалккă,
Каймах тивет пуль вăрманне.

— Кĕркурие, Лекçей, итле эс,
Ан ашкăнăр унта вутпа, —
Хушать те Ахваниç хуллен çеç,
Кĕç шăлтăртатрĕ урапа.

Анчах кăвайт пуçтарнă чух
Лекçей Левченкăпа тĕл пулчĕ.
Тарма хăтланчĕ, лешĕ кулчĕ:
«Эс улпутран тараймăн, çук!»

«Аçу-аннӳ сан кам? — тĕпчерĕ. —
Кам хушрĕ йывăçа хăртма?
(Кусем пĕр хунава хуçман.)
Чĕнместĕр? Калаçтарăп!» — терĕ.

Вăл илсе кайрĕ иккĕшне те
Ял хĕрринчи шатрун çуртне:
«Ик кун ман патăмра ĕçлетĕр!» —
Лешсем тăрмашрĕç каçченех.

Тепĕр кунне те темĕнччен
Лекçей пиччĕшĕпе ĕçлерĕ.
Канна чухне часах ӳкерчĕ
Çак вырăса тетрадĕнче.

Сăрларĕ вăрттăн, систермесĕр
Вăл тройкăпа пынисене.
Ун чаплă пысăк керменне
Ӳкерчĕ вăл хитрелетмесĕр.

Анчах та Левченко вăрманçă
Ача ăна ӳкернине
Курсассăн пит аванмарланчĕ,
Мухтарĕ вăл Лекçей ĕçне.

Тен, ĕненмерĕ те çак вăйсăр,
Ыран-паян вилес ача —
(Унран кĕтмен те вăл пачах)
Астаçă, чунĕпе те кăйкăр!

Улпут, улпут, çынран сăлтавсăр
Чылай эс кулнă вăрманта.
Тăрать умра ача пĕр сассăр,
Чуну çемçелчĕ-ши кăштах?

Паллах, эс йĕрĕннĕ те пулĕ
Çак çăпаталлă çынсенчен!
Пĕрремĕш хут ăнлантăн, тен:
Чунĕсенче вĕсен пур мулĕ!

Лекçейпеле паллашрĕ хăвăрт,
Çӳре эс терĕ хăнана.
Вăтанчĕ ку, туятăр хăвăр:
Вăрманçă хисеплет ăна!

Ун мăшăрĕ ялан хистерĕ
Ăна пулăшмалли çинчен.
Чирлĕскере кăшт-кашт сиплерĕ,
Ача сывалчĕ майĕпен.

**Левченко монологĕ**

Çак тăрăха укçашăн килтĕм.
Тавах турра — ĕç-пуç ăнать.
Хресченсене хыт алă кирлĕ —
Ун чух тĕллев пурнăçланать.

Вăрман парать-ха пысăк усă:
Перрен Француз фирмипеле
Контракт çырса эп алă пусрăм —
Лашман ĕçлет, укçа килет.

Вакун-вакунĕпе ăсатăп
Катка-пичке хăмисене.
Париж таран çĕклентĕр ятăм,
Пĕлейччĕр Левченко камне!

Кунти çынсем пачах пĕлместчĕç
Хатĕрлеме хăмасене.
Шалу ман тӳлеме тиветчĕ
Ют çĕршыври маçтăрсене.

Вĕсем хăйсем мĕн пĕлнине
Кăшт-кашт кăна кăтарткаларĕç.
Кайран... французĕсем тăнларĕç
Лашман хресчен вĕрентнине...

Çапах та эпĕ тĕлĕнеп-ха
Çак мĕскĕн, чухăн чăвашран:
Мĕнле вăй-хал вăл çитерет-ха
Тапаçланма йывăрлăхра?

Пуçне усмасăр, нăйкăшмасăр
Кирек мĕнле ĕçре тӳсет.
Хăй калашле: «Куç çеç хăратăр,
Алли темскер тума пĕлет».

Ĕнер, ак, вăрманта тĕл пултăм
Хыткан, имшер ик ачана
Çипуçĕ çĕтĕк те пир тумлă,
Кĕçĕнреххи çаруранах.

Çапах та килшĕн тăрăшаççĕ,
Кăвайт теç кирлĕ вĕсене.
Шăпăрлансем, ха, пулăшаççĕ
Пĕчĕккĕллех аслисене.

Паян каçпа пит тĕлĕнтерчĕ
Лекçей ятли, юха сăмса.
Натурăран тăвать ӳкерчĕк,
Халех тăрат хăть конкурса!

Ӳкерчĕксем мĕн чухлĕ тунă!
Асилтерет Шевченкăна!
Лекçей пекех вăл чухăн пулнă,
Халь, ак, Раççей пĕлет ăна!

Ха, чим-ха, çакă ачара, тен,
Ман чап, ман чыс, ман хушамат.
Халь пулăшас пăртак, кайран, тен,
Историе кĕме пулать...

## Путланнă ĕмĕтсем

«Сыв пул, ăс панă, савнă шкулăм,
Кунта вĕрентĕм эп аван.
Мухтав хутне те тивĕç пултăм,
Халь Чĕмпĕре çул уçă ман».

Сергей Ильич пит хисеплерӗ:
«Вӗренмелле, Лекçей, татах.
Аçупала калаçăп, — терӗ —
Учителе сан тухмаллах».

Çапла хаваслансах пӗлтерчӗ
Лекçей юратнă ашшӗне:
«Кӗркури пек ман вӗренесчӗ,
Каясчӗ Чӗмпӗр хулине».

«Ăс пухăр», — тенӗ Ахваниçӗ,
Ачисемпе сăмахласа.
Вӗсем куллен пӗлӳ илнишӗн
Ун чунӗ тăнă савăнса.

«Иван — асли — вӗренеймерӗ,
Пулас пулать ун ман тӗрек.
Çапах пӗртте ӳпкелешмерӗ,
Вăл кӳлӗнчӗ ӗçе ирех.

Унпа та канашлас-ха, — терӗ, —
Мӗн сунӗ кӗçӗн шăллӗне...»
Çӗртме çитсен,васкавлăн леçрӗ
Ик ывăлне чăваш шкулне.

Анчах усал хыпар кӗç çитрӗ
Турхан ялне çут Чӗмпӗртен:
«Лекçейӗм, шăллăм, питӗ чирлӗ», —
Çыру килет Кӗркурирен.

Ана илмешкӗн ашшӗ кайрӗ
Лаша кӳлсе чăваш шкулне:
«Учителе, шел, тухаймарӗ», —
Хӗрхенчӗ ашшӗ ывăлне.

Ăчан тĕллевĕсем путланчĕç:
«Ма ăраскал ман майлă мар?»
Çак шухăшсем ăша вăркатрĕç,
Қилте вăрах сывалнă май.

«Хам тĕллĕн ÿкерме вĕренĕп,
Ÿркев ан пустăр чĕреме.
Қил-тĕрĕшре кăшт ĕçлекелĕп,
Чăн тăвăпах ĕмĕтĕме...»

Самайлансан, кĕтмен пачах,
Ăна хирте Левченко курчĕ.
Тĕлĕннĕскер, вăрман улпучĕ
Ыйтать: «Алеша, эс ялтах?

Иван эс Чĕмпĕрте-çке терĕ.
Эп шухăшлаттăм: вĕренен. —
Қăсăкланса чылай тĕпчерĕ. —
Қилте, эппин, чирленĕрен?..»

Қăштах тăрсан, чĕнет хавассăн:
— Айта пĕрле, ларар часрах.
Сана эп парнесем парасшăн...
— Тавах.
— Ăна калан кайран!

Çил кăларса, утсем тапранчĕç,
Умра чăрмав вĕсемшĕн çук!
Пулсан та сакăлталлă çул,
Қĕçех уя хыçа хăварчĕç.

«Айăрĕсем епле маттур ун, —
Шутлать Лекçей хăй ăшĕнче. —
Қаймасть пуль сĕлĕ умĕнчен,
Қун пеккисем ялта çук урăх».

«Ак çитрĕмĕр! Мамаша, тухăр
Кĕтсе илме хăнасене!»
Кĕç лăпкă калаçу çеç юхрĕ
Пӳртре, ларсан диван çине.

«Петербургра чухне туянтăм
Мольберт та тĕрлĕ сăрăсем,
Картинăсем, учебниксем,
Кусем, Алеша, пурте санăн».

Ача пĕр тĕлĕнчĕ, хумханчĕ,
Улпут парнисене курсан.
Чун-чĕринче хĕлхем вăйланчĕ:
«Спасибо», — терĕ савăнса.

Вăл тĕлленмен-çке тĕлĕкре те, —
Мĕн чул пуянлăх умĕнче:
«Картинăсем кĕç ӳкеретĕп,
Аван тухать шур хут çинче».

Вăрман улпучĕ паллаштарчĕ
Кардовский, Репин ятсемпе.
«Чăн-чăн художник, — ăнлантарчĕ, —
Утмасть нихçан çын çулĕпе.

Кирек хăçан та вăл хăй теллĕн
Тĕпченĕçем шырать сăнар.
Чунра янрать пулсассăн хĕлĕх,
Ун сассине эс ан чакар.

Çак шухăшсем, тен, сапаланчăк,
Асрах тыт эп каланине,
Савать искусство ĕçчене,
Нихçан ан пул пит хыпаланчăк.

Ҫашни картинӑри тӗп шухӑш
Ҫын кӑмӑлне пӑлхантарса
Е ҫутӑ туйӑм ӑӑратса,
Тӗллев патне чӗнейтӗр шуххӑн».

Ҫакна Лекҫей куллен ӑнкарчӗ,
Улпут каланине манмарӗ.
Нумай ҫӗн сюжетсем тупса,
Ӳкерчӗ вӑл хавхаланса.

## «Турӑ палӑрӑшӗ»

Васкарӗ вӗҫленме кив ӗмӗр,
Ҫӗнни вӑй илчӗ майӗпен.
Малта ялтрарӗ ҫутӑ ӗмӗт,
Ҫывхарчӗ шуҫӑм пек куллен.

Унта-кунта хресчен пӑлханчӗ,
Хаяр нуши хистенӗрен,
Асаплӑ пурнӑҫ хӗснӗрен.
Ҫапах инҫе-ха кӗтнӗ шанчӑк.

Васкарӗ вӑхӑчӗ. Лекҫейӗн
Пӗр шухӑш ҫеҫ халь пуҫӗнче:
«Епле пулсан та вӗренесчӗ,
Анчах ҫул хупӑ пур енчен».

Тавах Левченкӑна, ӗненчӗ
Ачан сӑрлас ӑсталӑхне.
Художник мар—унпа хӗмленчӗ:
Ҫӑтартрӗ хӑй мӗн пӗлнине.

Вӑл Ивана та вырнаҫтарчӗ
Часах чиркӳ хураллама.
Ҫӗн ҫурт тума вӑрман кӑларчӗҫ,
Улпучӗ пулӑшрӗ самай.

«Атте-аннемшĕн тăрăшасчĕ,
Ӳсесчĕ сывă та патвар.
Вĕсемшĕн манăн пулас марччĕ
Куллен-кун ытлашши çăвар».

Хресчен ĕçне юрăхсăртан
Лекçей ир-каç çапла шутларĕ.
«Атте ĕнси çинче-и ларăп,
Ан пултăрччĕ кун пек нихçан...

Чим... Турăш чиркӳре юлмарĕ, —
Тесе каларĕ-çке Иван. —
Ăна хресченсене сутмашкăн
Кӳрсе килетчĕç, тет, таçтан».

Пултарăп-ши? — Лекçей ӳкерчĕ
Турамăшне картон çине.
Чĕп-чĕрĕ сăн куçран тинкерчĕ
Мухтанă пек ача ĕçне.

«Тете, тете, тен, уйăратăн
Эп тунине чăн турăшран?»
Леш тĕлĕнет: «Хăвах сăрлатăн?
Куна сутма пулать, ара...»

Пуян çынсем ыйтнисене те
Лекçей куллен-кун пурнăçлать.
Вырсарникун вĕсен сăнне те
Мольберт умне лартса сăрлать.

«Ку турă палăрăшĕ», — теççĕ
Турра ĕненекен çынсем.
Кăштах килет тин укçа-тенкĕ,
Тата килет чăн-чăн хисеп.

Асилтерет вӗсен кил-ҫурчӗ
Художниксен мастерскойне.
Сӑмах ҫӳрет: «Чылай хӗн курчӗ,
Ҫапах шанать хӑй ӗмӗтне».

Ҫапла Лекҫей ялтан тухмасӑр
Куллен туптать ӑсталӑхне.
Ҫулсем шӑваҫҫӗ васкамасӑр
Кичем, кив ӗмӗр сӗмлӗхне.

**1899 ҫул. Мӑян ҫулӗ**

Хуҫаланать хура элчелӗ
Татах Турхан тӑрӑхӗнче.
Хӗнрен тухайӗ-ши хресченӗ?
Чир-чӗр асать, ав, ялсенче.

Ҫанталӑк типӗ тӑчӗ, шӑрӑх.
Хӗвелӗ хӗртрӗ ҫӗр питне.
Хӑруш хыпар ҫӳрет ял тӑрӑх:
«Пӑвать кӗҫ выҫлӑх кашнине».

Ана ҫинче пуш пучахсем ҫеҫ,
Ҫумкурӑкӗ йӗри-тавра.
Вилес килмест-ҫке, тӑвансемӗр,
Тухасчӗ сыввӑн тамӑкран.

Лекҫей яш каччӑ халь, анчах та
Чирленӗрен килтен тухмасть.
Ҫынсем пуплеҫҫӗ шав: «Чӑнах та,
Ҫак сывлӑхпа хӗл каҫаймасть.

Левченко та тухса, ав, кайрӗ,
Пурнать, тет, вӑл Полтавӑра.
Ана улпут пулӑшкаларӗ,
Тухайӗ-ши ҫак асапран?

Автансăр ял енне пуль çулĕ,
Тур çырнинчен иртеес çук.
Сипленĕшĕн, тет, кирлĕ мулĕ,
Анчах вăл Ахваниçĕн çук».

Этем, вилессине сиссен те,
Çут ĕмĕте шанать ялан:
«Часах эп самайланăп», — тет те
Ыр шухăшне çеç пит хаклать.

Çак ĕмĕт Лекçейре упранчĕ,
Кичемлĕхе пĕрмай сирсе.
Асталăх унăн аталанчĕ,
Йывăрлăхра, чире çĕнсе.

Малашлăха савса ӳкерчĕ
Ашшĕпеле хăй портретне.
Сăна-ха тимлĕн вĕсене:
Унта мĕн чул кунçулăн терчĕ.

Ав, пиçĕк куçлă Ахваниçĕ
Пăхать, хĕне парăнманскер.
Унпа хресчен çулне эс виçĕн,
Тăрать тӳп-тӳрĕ, вăйлăскер.

«Çук, кирлĕ мар укçа та енчĕк», —
Шутлать Лекçей сăрланăçем.
Искусство тӳпине çĕкленчĕ,
Мал ĕмĕтне чăн килтерсе.

Хăш чух, халтан кайсан, йăванчĕ
Пӳртри кутник сакки çине.
Вăй пухăнчĕ. Пĕтмерĕ шанчăк.
Ӳкерчĕ вăл Турхан ялне.

Анчах выртса тăма пуçларĕ:
«Хăпсам, хăпсам эс, чир, манран!»
Хăй лартнă йăмрасем кашларĕç,
Тавралăх курăнчĕ хуран...

Çу кунĕсем хыçа ăсанчĕç,
Хĕмне ытлашшипех тăкса.
Раубе вырăс — çĕн вăрманçă
Турхан ялне çитет часах.

Унпа пĕрле врачсем те килнĕ,
Хресченсене çăлас тесе.
Çуртсем чылайăш пушă: вилнĕ
Усал чире пула çынсем.

Ялти çак хыпара илтсен,
Улпут çуртне Иван васкарĕ.
Хыпаланса вăл тархасларĕ:
«Сыватăр Лекçее чиртен...»

Врачсем калаçрĕç те шӳтлерĕç
Хура пӳртри яш каччăпа.
Самайлансан, леш тĕлĕнтерчĕ
Ас-халĕпе каярахпа.

«Чăн-чăн кĕтрет-çке ку! — шутларĕç, —
Çак тĕттĕм, мĕскĕн вырăнта
Епле талант ун аталаннă?
Картинисем епле тата?!»

Варганова Мария терĕç
Çак ушкăнри пĕр сар хĕре.
Улпут тăванĕ, вăл хистерĕ:
«Пăрахар мар ăна хĕнре.

Ытла та чухăн тăрăхра
(Чугун çул утмăл çухрăмра)
Юлсассăн, ун сӳнет таланчĕ,
Илсе кайсан, чăнах аванччĕ».

«Ăна пулăшмалла халь пирĕн,
Епле пулсан та çăлмалла.
Петербургра сыватмалла», —
Қашнийĕн шухăш пулнă çирĕп.

«Пăрахмăпăр», — тесе шантарчĕç
Врачсем çине-çинех ăна.
Юлашки кун та, ак, çывхарчĕ,
Çук, манмĕ Қокель çав куна.

Çук, манмĕ Қокель çав куна,
Ун умĕнче тинех çул уçă!
Тĕллев те ун пĕрре кăна:
«Чăвашсене кӳресчĕ усă».

Турханăн йăмрисем ал сулнăн,
Çил вĕрнĕ май пăшăлтатса,
Ăна ыр çул, телей çеç сунчĕç,
Ăсатрĕç кăмăллăн пăхса.

Çанталăк савăнчĕ. Ташларĕ
Хĕвел Шлипшурăн юххинче.
Лекçей художникăн пуçланчĕ
Çĕн пурнăç Питĕр хулинче!

**Хыççăн калани**

Ун кайранхи çул-йĕрĕ паллă,
Ăна пĕлет мĕнпур тĕнче.
Вĕреннĕ чух чи лайăх паллă
Вăл илнĕ Репин класĕнче.

Пĕрремĕш революци хумĕ
Кисрентерсен патша тронне,
Çĕн сăнарсем вырнаçнă сумлăн,
Пăлхантарса ăс-хакăлне.

Кĕç академире ӳкернĕ
Дипломлă «Чайнăйра» ĕçпе,
Мал ĕмĕтлĕ таланчĕпе
Астасене те тĕлĕнтернĕ.

Çак паллă: ун картинине
Большевиксем чунтан мухтанă.
Вăл ăнтăлнă Çĕн Кун патне,
Ют пулнă шух чĕришĕн канăç.

Италие кайсан, хăй-халлĕн
Паллашнă аслă Горькипе.
Кур: Луначарский асăрханă
Киленнĕ май ун ĕçĕпе.

«Алеша, ухнем! — тенĕ туслăн
Ана Шаляпин, тĕл пулсан. —
Çут тĕллевне хыт шаннăран
Кунçул тин пулмĕ сан çур пуслăх...»

Чăваш художникĕ! Пĕрремĕш!
Искусство тӳпинче çиçен.
Мал ĕмĕтлĕ картинусен
Паян кунччен чакмасть пĕлтерĕш:

«Чăваш хĕрарăмĕ», «Ликбезĕ»,
Е «Итальянецри» сăнсем,
Этюдчĕсем, «Автопортречĕ»,
Асталăхăн шедеврĕсем...

Эс вӑтӑр пилӗк ҫул вӗрентнӗ
Украйнӑн ывӑлӗ-хӗрне.
Тивлетлӗ ӗмӗтпе хӗмленнӗ,
Ҫӳлте тытса чӑваш ятне.

«Профессор Кокелӗн ҫӗршывӗ», —
Каласҫӗ халь Турхан ҫинчен.
Эс ӗмӗр-ӗмӗр пулӑн сывӑ,
Эс ӗмӗр халӑх асӗнче!

# ТУПМАЛЛИ

## *Сӑвӑсем*

### САВАПЛА ВЫРАНСЕМ


«Упи каҫми» варсемлӗ ман ҫӗршывӑм...» . . 3
«Тӑван ен юррисем...» . . . . —
Ачалӑх . . . . . . . 4
Тӑван ҫӗршыв . . . . . . —
Икӗ уяв . . . . . . . 5
«Чӑн, инкеке сиссех, эс йӗтӗн пулӗ...» . . 6
«Тунсӑхларӑм паян эп, юлташӑм...» . . . 7
Ӗмӗрхи ӳкерчӗк . . . . . —
«Чӗкеҫ чӗлхиллӗ пӗчӗк хӗрӗм...» . . . 8
«Ача ӳсет, чупса ҫӳрет хавассӑн...» . . . —
«Пин-пин тӗспе ҫиҫет умра тавралӑх...» . . 9
«Ҫутҫанталӑк пытанчӑк вӑйпа...» . . . —
«Кашнин пур хӑйӗн вӑхӑчӗ...» . . . 10
Больницӑра . . . . . . . . 11
«Ҫут тӗнче! Ҫӗр ҫинче пурӑнма...» . . . 12
«Чӗрчун тӗнчи валли кӑна-и кирлӗ?..» . . 13
«Ӗнер кӑна каҫса кайса мухтатчӗҫ...» . . 14
«Юлташӑм, канӑҫсӑр эс питӗ...» . . . —
«Ма пытарас?..» . . . . . —
«Нумай ҫисессӗн, пыл та йӳҫӗ, теҫҫӗ...» . . 15
«Халӑхӑма пит ҫывӑх авалтан...» . . —
«Йӑшсассӑн та кун каҫипе...» . . . —
«Тапса тӑран ҫӑлкуҫӗ хӑй — поэзи...» . . . 16
Чӗлхемӗре . . . . . . . —
«Ялйышӑмӑн калаҫӑвӗ ансат...» . . . 18

«Элек çути чăрмав курмасăр...» . . . . . —
«Эп—чирлĕччĕ, эс шантараттăн...» . . . 19
«Эс пулнă чух кăна ман пӳлĕм çутă...» . . —
Кĕрхи шухăшсем . . . . . . 20
«Çулсем иртӳçĕн тĕвĕленчĕ...» . . . 21

## ПОЭМĂСЕМ

Тăван ен йыхравĕ . . . . . . 22
Турхан художникĕ . . . . . . 45

Для старшего школьного возраста

**Николай Константинович Кушманов**

**МОТИВЫ РОДНОГО КРАЯ**

Стихи и поэмы

На чувашском языке

Редактор *В. П. Тимаков*
Художник *И. П. Аверьянов*
Художественный редактор *М. Д. Давлятшин*
Технический редактор *Л. Н. Кондрашкина*
Корректор *Р. П. Кудряшова*

**ИБ 2358**

Сдано в набор 6.03.89. Подписано к печати 30.11.89. НТ 31285. Формат 70×90¹/₃₂. Бумага офсетная № 2. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 2,92. Усл. кр.-отт. 3,14. Учетно-изд. л. 3,05. Тираж 3000 экз. Заказ № 836. Изд. № 61. Цена 10 коп.

Чувашское книжное издательство,
428000, г. Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли,
428019, г. Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

10 пус

## АВТОР ÇИНЧЕН

Николай Кушманов (Кушманов Николай Константинович) 1949 çулта Патăръел районĕнчи Турхан ялĕнче çуралнă. Турханти вăтам шкулта вĕреннĕ. Совет Çарĕнче службăра пулнă. Шупашкарти строительство техникумĕнчен, Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă. Чылай çул хушши Шупашкарти коммуналлă хуçалăхăн организацийĕсенче мастерта, аслă инженерта ĕçленĕ. Каярахпа «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕнче вăй хунă. Халĕ вăл — Чăваш АССР писателĕсен Союзĕн правленийĕн ответлă секретарĕ.

Çамрăк сăвăçăн малтанхи сăввисем Патăръел районĕнчи «Авангард» хаçатра 1970 çулта кун çути курнă. Ун хыççăн вăл «Çĕнĕ кĕвĕ» (1973 ç., 1976 ç.), «Çеçпĕл çеçкисем» (1985 ç.) коллективлă сборниксене кăларнă çĕре хутшăннă.

1987 çулта авторăн пĕрремĕш кĕнеки — «Кунçул ытамĕнче» — пичетленсе тухнă. Унăн сăввисене, поэмисене республикăра тухса тăракан «Коммунизм ялавĕ», «Пионер сасси» хаçатсенче, «Тăван Атăл», «Ялав», «Хатĕр пул» журналсенче час-часах вулама пулать.

ЧĂВАШ
КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ